Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБĔР 29 КĔÇНЕРНИКУН 225 (5038) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 5—67, ред. заместителĕн — 3—97, редакци çекретарĕн — 4—40, парти пурнăç пайĕн — 0—88, ялхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн — 0—88, промышлĕннăç пайĕн — 7—97, ялкорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Партилĕ-политикăлă ĕçе малала вăйлатса пырассишĕн

Партин йертсе пыракан органĕсен отчотпа суйлав кампанийĕ иртнĕ хыççăнхи вăхăт партилĕ-политикăлă ĕçре çĕнĕрен çитĕнӳсем тунипе палăрса тăрать. Çакă, большевикла критикăпа самокритика никĕсĕ çинче иртнĕ кампани, парти организацисен пурнăçĕнче тарăн йĕр хăварчĕ. Парти речĕсен организацилĕхĕ вăйлăн ӳсрĕ, тăшмансене тупса палăртас, вĕсене пĕтерсе пырас ĕçре коммунистсен кусĕ вичкĕнрех пăхма пуçларĕ. Партин массă хушшинчи авторитечĕ питĕ вăйлăн ӳсрĕ. Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерни — парти организацисем ĕççыннисемпе тачă çыхăну тытнине питех те уçăмлăн кăтартса пачĕ.

Партилĕ-политикăлă ĕçри çитĕнӳсем парти пĕрмайах хамăр çĕршыври чи лайăх, малта пыракан çынсен шучĕпе ӳссе пынинче те курăнать. Çакна каласан та çителĕклĕ пулмала: партине çĕнĕрен членсем илме пуçланăранпа партине кĕме 450 пин зайавлени панă, ку таранччен ĕнтĕ парти кандидатне 250 пин çын илнĕ. 100 пин ытла кандидата парти членне куçарнă. Çак цифрăсем вĕсем пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр йуратса шанса тăни çинчен калаççĕ. Вĕсем парти хăватне, унăн массăсем хушшинчи пысăк авторитетне кăтартса параççĕ.

Коммунистсен творчĕствăлă пысăк вăйĕ ку таранччен тунă çитĕнӳсене çирĕплетни çеç мар тата пысăкрах çĕнĕ çитĕнӳсем тума, кашни парторганизацине большевисăмăн крепăçĕ туса хума, партин массă хушшинчи влийанине тата ытларах вăйлатма май парать.

Партилĕ-политикăлă çĕнĕ çитĕнӳсем вĕсем, паллах, хăйсем тĕллĕн пулма пултараймаççĕ, вĕсене кĕрешсе илес пулать. Çакăн пек тăвас тесен, кайа йулнă участкăсене малала йарса пырас пулать, парти организацисен ĕçĕнчи вăйсăр вырăнсене йаланах курса тăрас пулать, вĕсене вăхăтра пулăшу парас пулать.

Сăмахран, отчотпа суйлав кампани вăхăтĕнче партин чылай йертсе пыракан органĕсен ĕçĕсене çителĕксĕр, тесе хак панине манма йурамасть. Çакăн пек, Свердлăв, Саратăв, Иванăвă, Сталинград облăçĕсенчи пуçламĕш парторганизацисенче виççĕмĕш пайне йахăнах парткомсемпе парторгсен ĕçĕсене çителĕксĕр, тесе хак панă. Малала тата, районсенчи партконференцисем йе партин районри пухăвĕсем сахал мар райкомсен ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă.

Çакăн пек пулнипе килĕшме пулать-и, çакăн пек организацисене халĕ те хăйсене тĕллĕн, партин йертсе пыракан çӳлти органĕсем йенчен халех кирлĕ пек пысăк пулăшу памасăр хăварма йурать-и? Паллах, йурамасть, мĕншĕн тесен, çак вăл парторганизацисен ĕçĕ лайăхланасси патĕнче мар, начарланасси патне илсе пырать. Пулăшман пирки, кирлĕ пек пăхман пирки кăна пĕр вырăнта тапăртатса тăракан парторганизацисем темĕн чухлех. Акă ун пек тĕслĕхсенчен пĕри. Оренбург облăçĕнче райком ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă вунă райкомран пĕри Шарлык райкомĕ пулать. Отчотпа суйлав пухувĕ пулнăранпа 4 уйăх ытла иртнĕ пулсан та, çак организацире ĕçсем нимĕн чухлĕ те лайăхланман. Райком пĕрре те парти ӳсĕмĕ çинчен ыйту лартса сӳтсе-йавман, кунта кандидата илнисен хисепĕ те пĕрерĕн кăна шутланать. Парти вĕренĕвне пĕтĕмпех йапăхтарса йанă. Район хуçалăх ĕçĕсенче кайа йулса пырать.

Чăн малтан Шарлык организаци пек организацисене Обком йенчен пулăшу кирли паллă мари вара. Шел те ĕнтĕ, анчах çакна ăнланмаççĕ-ха. Райком ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă организацисен ĕçне халех хутшăнмасан, çак райкомсем çитес отчотпа суйлав пухăвĕсенче те çителĕксĕр ĕçленĕ тесе хак илме пултарассине Оренбургра ăнланмаççĕ пулас.

Пирĕн задач — çакăн пек пулма парас марри пулать. Чи кайа йулнă парторганизацине те малта пыракан организаци тума пирĕн пурмайсем те пур. Çакăн пек тăвас тесен, кайа йулнă организацисене пулăшас пулать, вĕсен ĕçне асăрхаса тăрас пулать, руководителĕсене ответлă пулма вĕрентес пулать. ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕн итогĕсене май тумалли хăшпĕр ĕçсем çинчен“ йышăннă постановленире йертсе пыракан органĕсен ĕçĕсене çителĕксĕр тесе шутланă организацисене пулăшма хушать. Çак ĕççене пĕтĕмпех те йалтах пурнăçа кĕртес пулать.

Партин обкомĕсемпе крайкомĕсен, нацилĕ компарти Тĕпкомĕсен бӳро ларăвĕсемпе пленумсенче ĕçĕсене çителĕксĕр тесе хак панă кашни райкомсемпе хула комитечĕсен отчотлă доклачĕсене итлес пулать. Обкомсен, крайкомсен, нацилĕ компарти Тĕпкомĕсен çак организацисенче партилĕ-политикăлă ĕççене вăйлатса йамалли майсем йышăнас пулать. Çакăн пек отчотсем итлени партин йертсе пыракан органне кашни парторганизацире ĕçсем мĕнле тăнине тарăнăн пĕлме, унăн ĕçĕнчи вăйсăр йенĕсемпе вăйлă йенĕсене курма пулăшать, çапла вара кирлĕ пек пулăшу пама май парать. Отчотлă доклачĕсем итличчен малтан, паллах, отчот тăвакан парторганизацин ĕçне тĕплĕн тĕрĕслесе тухмала, обкомăн йе крайкомăн йертсе пыракан работникĕсен вырăнсенче пулмала, райкомăн йе хула комитечĕн ĕçĕсемпе хăйсен паллашмала, парторганизаци активĕпе канашласа пăхмала, районăн пĕтĕм политикăлă тата хуçалăхлă пурнăçне пĕлмеле.

Партком йе парторг ĕçне çителĕксĕр тесе шутланă пуçламĕш парторганизацисем çине те кирлĕ пек пăхмасăр тăратса хăвармала мар. Райкомсемпе хула комитечĕсен бӳро ларăвĕсемпе пленумĕсенче çакнашкал пуçламĕш парторганизацисен отчотлă доклачĕсене итлемеле, çапла тунипе вăл пуçламĕш парторганизацисене кирлĕ пек пулăшу памала, вĕсенче партилĕ-политикăлă ĕçе тĕпренех лайăхлатмала. Райкомра доклад тăни пуçламĕш парторганизаци пурнăçĕнче паллă тапхăр, улшăну тапхăрĕ пулмала, мĕншĕн тесен, тĕп задач вăл доклад итлесси çеç мар, тата организацине пулăшасси, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме пулăшакан майсене кăтартса парасси пулать.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ коммунистсен сĕнĕвĕсем çинчен йышăннă постановлени пысăк вырăнта тăмала. „Обкомсене, крайкомсене, нацилĕ компарти Тĕпкомĕсене, çавăн пекех тата парти райкомĕсемпе хула комитечĕсене те коммунистсем парти конференцисемпе партин отчотпа суйлав пухăвĕсенче тапратнă пур ыйтусемпе сĕнӳсене те пĕр уйăх хушшинче пăхса тухма хушас“ — тенĕ Тĕпком постановленинче.

Партконференцисемпе партин отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă резолуцисем коммунистсем тапратнă час-часах нумай ыйтусене йарса илеймеççĕ. Çавăнпа та парти членĕсем саккунлă претензи параççĕ. Коммунист хăй каланисем ахаль йулманине курсан, хăйĕн сĕнĕвĕсене çийĕнчех пурнăçа кĕртнине курсан хĕпĕртет, савăнать, вăл хăйĕн кашни сăмахĕшĕн, кашни ĕçĕшĕн пысăк ответлă пулнине туйать. Вăл хăйĕнчен те, ыттисенчен те ытларах ыйтма пуçлать. Анчах хăшпĕр организацисенче мĕнле пулать-ха? Коммунистсем тапратакан паха сĕнӳсене, нумай çĕнĕ ыйтусене çырса хунă протоколсем архивра тусанпа витĕнсе выртаççĕ. Ленинградри парторганизаци опычĕпе усă курмала: конференцисенче, парти пухăвĕсенче панă сĕнӳсене, критикла асăрхаттарнисене пурне те пĕр çĕре пухас пулать, вĕсене кулленхи ĕçре хисепе илсе пырас пулать.

Вырăнти парторганизацисем çӳлти органсем умĕнче отчот тăвассине пур майсемпе те сарса пымала, отчотсене уйрăм ыйтусем тăрăх мар, ПĔТĔМ ĕç çинчен итлес пулать. Çакăн пек отчот тума хатĕрленекен руководителĕн хăйĕн савăтĕнчи йе районри чи инçетри кĕтессене кĕрсе тухас пулать, вара вăл нумай йапаласем, нумай ĕçсем курма, илтме пултарать, унăн доклачĕ те йертсе пыма пĕлессин хăйне майлă екзамĕнĕ, ПАРТИ РУКОВОДИТЕЛЕН ЙАТНЕ ИЛМЕЛИ ТИВĔÇЛĔ екзамĕн пулать. Çавăн пекех, çакăн хыççăн парти организаци райком йе Обком умне чĕре çынсемпе, хăйĕн пĕтĕм ыйтăвĕсемпе, нушисемпе тухса тăрать. Паллă мар-и ĕнтĕ, çакăн пек тунинчен парти руководствишĕн усăлă ĕç кăна пулма пултарать.

Парти Тĕпкомĕн çакăнта асăнна решенисем партилĕ-политикăлă ĕççене малала вăйлатса пырас йенĕпе пысăк вырăнта тăраççĕ. Çакă вăл хушнă ĕçе пурнăçланине большевикла тĕрĕслемели çинчен калакан примерсенчен пĕри пулать, — хушнă ĕçе пурнăçланине тĕрĕслесси — кашни парторганизаци ĕçĕнче çистемă пулса тăмала.

Руководствăн большевикла çтилĕ ĕç хăй йухăмĕпе пырасса шанмине тӳсме пултараймасть, вăл нихăш участкă та кайа йулнине тӳсме пултараймасть. Тĕп Комитет кăтартса панисене хăвăрттăн, хастаррăн тытăнса пурнăçлани парти организацисен кĕрешӳ пултарулăхне тата ытларах тĕреклетет, партилĕ-политикăлă ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем кӳрет.

(„Правда“ умстатйи, 1938 ç.)

(„Правда“ умстатйи, 1938 ç.)

Йугослави халăхĕ Чехословакипе пĕр шухăшлă

Белградран пĕлтернĕ тăрăх, Йугослави халăхĕ хушшинче вăл Чехословакипе пĕр шухăшлă пулнине кăтартакан йухăм массăллăн сарăлать. Пухусемпе демонстрацисем тума чарнă пулин те, Белградра пысăк демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацире пулнисем Йугослави правителĕствинчен — Чехословаки çине Германи вăрçăпа тапăнсан Чехословакине çийĕнчех пулăшу пама ыйтнă. Хулан центрти плошчĕтĕнче демонстрантсем, фашистсене хирĕç хытă кăшкăрса, фашистсен свастикăллă йалавне çунтарса йанă. Йугославинче пурăнакан чехословаксене, пĕтĕм çĕршывĕпе мобилизаци тунă майпа Чехословакине кайакансене, вокзалта чаплăн ăсатнă.

(ТАСС).

Чăваш парторганизацин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ

Конференци дневникĕ

Çентабĕрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи лару

Делегатсем парти Обкомĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсене большевикла çивĕчлĕхпе критиклеççĕ, республикăри хуçалăхпа культура строителĕствинчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртса, вăл кĕрешӳве малашне вăйлатса пымалли майсене кăтартса параççĕ.

— Халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен органсенче тăшмансем ларнă. Вĕсем нумай çулсем хушши хăйсен ирсĕр, сăтăрла ĕçĕсене туса пынă. Сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн республикăра халĕ те çителĕклĕ ĕçлени çук. Шкул çулне çитнĕ ачасем шкула хутшăнмасăр чылай йулнă. Шкул çурчĕсем çитмеççĕ. Шкул çурчĕсене питех те вăраххăн тăваççĕ. Учебниксене кăларас ĕç те калама çук йапăх пулса пырать. Кăçал ку таранччен 12 учебник çеç кăларнă тата 26 учебник кăлармала.

Халăх тăшманĕсем библиотекăсен ĕçне сӳнтерсе лартма тăрăшнă. Шупашкарта Ивановпа Спасăв хушнипе пĕр библиотекă хупнă. Вăл библиотекăн хаклă кĕнекисене вӳрĕ подвала кăларса ывăтнă. Çак сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе Чăваш парторганизацин, çутĕç органĕсен çине тăрса ĕçлемеле пулать, — тет Харитонăв йулташ (ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ).

Партин Иетĕрне райком çекретарĕ Албутăв йулташ ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Ивановăн ирсĕр ĕçĕсем çинчен каласа парать:

— Иванов политикă тĕлĕшĕнчен çеç мар, йала йенчен те таса мар. Вăл Йетĕрнере ĕçленĕ чухне тĕрлĕрен хĕрарăмсемпе йавăçса пурăннă, ĕçкĕ-çикĕсем туса иртернĕ, тăшманла етемсемпе çыхăну тытнă.

Полтĕв, Йерышĕв йулташсем Ивановăн ирсĕр ĕçĕсене пытарса усранă, Ивановпа йăпăлтатнă.

— Çирĕм çул ытла ĕнтĕ епĕр капиталисăм пусмăрне хамăр çинчен сирпĕтни. Анчах пирĕн йертсе пыракан ĕçсенче халăха каллех çак пусмăра кĕртсе ӳкерме хăтланнă тата фашистсене сутăннă çынсем ларнă, — тесе пуçлать хăйĕн сăмахне орденоносец Капчикăв йулташ („Трийĕр“ колхоз председателĕ, Шăмăршă р.). Вăл уйрăмах Шăмăршă районĕнчи тăшмансен ирсĕр ĕçĕсем çинчен нумай каласа пачĕ.

— Прокурор Колпаков Матвейĕвпа мĕнле çыхăну тытнине тĕрĕслес пулать, вăл унăн йăмăкне качча илнĕ, — тет Капчикăв хăйĕн сăмахĕнче.

Филиппăв (Чăваш АССР Верховнăй сучĕ) парти Обкомĕ судпа прокуратурă ĕçĕсене начар йертсе пынине кăтартать.

ПСК(б)П Обкомĕ судпа следстви органĕсене çирĕплетес тĕлĕшпе питех те йапăх ĕçленĕ. Нумай вăхăт хушши ЧАССР Иустици Халăх Комиссарĕ, республика прокурорĕ, Верховнăй Суд председателĕ т. ыт. те пулман. Республика центрĕсенче çапла пулнă пулсан, районсенче вăл ĕç татах та йапăхрах. Халăх судйисем çителĕклĕ пулманнине пула, пайанхи куна республикăра судсенче пăхса тухмалли ĕçсем питĕ нумай пухăннă.

— Çапла пулсан та, Обком отчотне тунă докладчик Дубăв йулташ хăйĕн докладĕнче судпа следстви тата прокуратурă органĕсем пирки нимĕн те каламарĕ, — тет Филиппăв йулташ.

Иакăвлĕвă йулташ (Вăрмар) парти Обкомĕн бӳро членĕсем, уйрăмăнах Иванов массăран уйăрăлса кайни, массă сассине итлеменни çинчен, парти Обкомĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе йапăх ĕçлени çинчен калать.

Обкомăн пайĕсен ĕçĕсене тишкĕрнĕ май, Иакăвлĕвă йулташ уйрăмăнах Обкомăн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕн ĕçĕсем пирки нумай чарăнса тăрать:

— Обкомăн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕ хăйĕн сăн-сăпатне кăтартайман, вырăнти предприйатисен пурнăçне пĕлмен. Енĕшпуçĕнчи кирпĕч савăтне йусасси пирки никам та шухăшламасть. Савăт ишĕлет, директăрсем тăтăшах улшăнаççĕ. Обкомăн промышлĕннăçпа транспăрт пайĕн пуçлăхĕ пулнă Пожеданăв йулташ çак çитменлĕхсене пĕтерессишĕн тăрăшман.

Павлăв йулташ (Обком) Парти Обкомĕ политикăлă çулйĕре тĕрĕс тытса пыраймани, ПСК(б)П Тĕпкомĕн феврал-март уйăхĕсенче (1937 ç.) тата йанвар уйăхĕнче (1938 ç.) пулнă пленумĕсенче йышăннă решенисене пурнăçламанни çинчен калать.

— Ман çинчен кунта тĕрĕс тухса каларĕç. Епĕ вăл йăнăшсене пĕтĕмпех йышăнатăп. Епĕ Иванов икĕпитленсе ĕçленине тăрă шыв çине кăлараймаи — уншăн епĕ айăплă, ответ тытма тивĕçлĕ. Иванов, Спасăв, Розанăв тăшманла ĕçленĕ, вĕсем Обком бӳро членĕсене, пленум членĕсене, пĕтĕм парторганизацине улталанă, вĕсем тăшманла етемсене ответлă ĕçсене лартнă.

Обком бӳровĕнче большевикла критикă пулман, бӳро ларăвĕсенче, пленумсенче, райком çекретарĕсен канашлăвĕсенче самокритикăна хĕссе пынă.

Павлăв йулташ Иванов чăваш чĕлхин çĕнĕ орфографине йĕркелес ĕçе мĕнле пăтраштарнисем çинчен калать.

— Орфографи ыйтăвне ку таранччен те татса паманнишĕн Иванов айăплă. Çĕнĕрен кĕртме палăртнă саспаллисене малтан чăваш чĕлхине урăх чĕлхерен куçнă сăмахсенче çеç çырма пăхначчĕ, кайран Иванов чăваш сăмахĕсенче те çыртарасшăн пулчĕ. Çавăнпа та ку ыйтăва çак таранчен те татса паман. Çак ĕçре Обком бӳро членĕ Н. Çеменăв та пулăшмарĕ, вăл чăвашла пĕлет пулсан та, хаçата валли хăйĕн статйисене вырăсла çырать. Орфографи ыйтăвне татса паманни учебниксем кăларма чăрмантарать.

Малала Павлăв йулташ учителсене массăлăн ĕçрен кăларнине хирĕç кĕрешменнипе тата халăх тăшманĕсене Афиногенăвпа Йетрухина парти билечĕсем панипе политикăлă йăнăш тунине йышăнать.

Григорйĕв йулташ (Вăрмар) МТС-ри çитменлĕхсем çинчен, Хатĕрлевсен Халăх Комиссарнăчĕн уполномоченнăйĕ Митков йулташ натурплатă пухас ĕçе вăйлатассишĕн тăрăшманни çинчен чарăнса тăрать.

Тараскинă йулташ (ПСÇЛКС хула комитечĕ) Шупашкар хулинчи пуçламĕш парторганизацисен комсомол организацине йертсе пырассине вăйлатмалли çинчен калать.

Тараскинă йулташ уйрăмах З. Андрейĕвă йулташăн çитменлĕхĕсем çинчен хытă каларĕ. Андрейĕвă йулташ Спасăвăн, Матвейĕвăн, Васильĕвăн тăшманла ĕçĕсене палăртма тăрăшман, вĕсен ирсĕр ĕçĕсене хирĕç кĕрешес вырăнне, Матвейĕва хула комитечĕн пленумне суйлаттарасшăн пулнă.

А. Иванов (партколлеги членĕ) парти Обкомĕн ĕçĕсене хытă тишкĕрчĕ.

— Парти Обкомĕн ответлă работникĕсем хăйсен йăнăшĕсем çинчен уççăн калама хăраççĕ. Г. Çеменăв буржуалă-националистпа Кузнецовпа пĕрле ĕçленĕ. Тăшмансем Обкомра хăйсен вырăнне хăйсене килĕшӳлĕ çынсене хăварма тăрăшнă. Йурйĕв вырăнне Алексейĕв (крайеведени обшчĕствин членĕ) йулнă, шкул пайĕнче те крайеведени обшчĕствин членĕ М. Григорйĕв ĕçленĕ. Халĕ Обкомăн пропагандă пайĕнче тăвансем йенĕпе тăсамар Çергейĕв ларать. Ăçтан-ха вĕсем критикă сарма пултарччăр?

Унтан А. Иванов й. кадрсем пирки чарăнса тăрать.

— Кадрсене тишкĕрсе, пур йенчĕн те сăнаса илни çук. Йерышĕва Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕ турĕç. Вăл Ивановпа йăпăлтатса пурăннине пула çак вырăна лекме пултарнă.

Маншă Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕррремĕш Çессинче хамăран ыйтмасăрах Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ туса хучĕç.

Йулашкинчен А. Иванов йулташ Ахахăвпа Лапин йулташсем çĕр вăхăтра Петрова хӳтеленĕ, тесе пĕлтерет.

Елĕк райком çекретарĕ Меценатăвă йулташ райком работникĕсене Обком начар пулăшни çинчен, Обком сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлеменни çинчен калать. Парти ыйтăвĕсем тăрăх райком çекретарĕсен канашлăвĕсене пухмапа пĕрех.

Парти Обкомĕ тепĕр чухне районри работниксене райкомпа килĕшмесĕрех ĕçрен кăларнă. Тырпул пуçтарса кĕртме тытăнас умĕн Елĕк МТС директăрне ĕçрен кăларчĕç. Ку кирлĕ пулнă, анчах унăн вырăнне урăх çын тупса памарĕç. Çакăн хыççăннах директăрăн политикă йенĕпе ĕçлекен заместителне вĕренме йачĕç, аслă механике ĕçрен кăларчĕç. Пĕр сăмахпа каласан, МТ Станцине руководствăсăр тăратса хăварчĕç. Çакăн пек „пулăшса“ пынă пире Обком.

Обком бӳро членĕ Новикăв йулташ парти Обкомĕ тĕрĕс мар майсемпе ĕçлесе пыни çинчен чарăнса тăрать.

— Парти Обкомĕн ĕçĕнче коллективлăх пулман. Иванов тăшманла çынсене хӳтĕлесе пынă, ăна хирĕçле калакан хăшпĕр çынсене айаккарих сирме, путарса пыма тăрăшнă.

Мана Обком бӳровĕ ларăвĕсене сахал чĕннĕ, епĕ бӳро ларăвĕсенче мĕн пурĕ те 5—6 хут çеç пулнă. Тепĕр чухне епĕ Обком мĕн йышăннине те пĕлмесĕрех йулаттăм.

Иванов хăйĕн ирсĕр ĕçĕсене путарса пыма Йетĕрнерен ним шарламан çынсене, хăйне майлă çынсене, йăпăлтатса ĕçлекенсене чĕнсе килнĕ.

Павлăв кунта тӳррĕн пĕтĕм чĕререн каламарĕ. Вăл Ивановăн сылтăм алли вырăнĕнче пулнă Обком бӳровĕнче хăй пуçарнипе, хăй тĕллĕн пĕр ыйту та лартман вăл. Учителсене ĕçрен массăлă кăларнинче Павлăв айăплă. Çак ĕçе Обком пуçарса йанă. Обком учителсен, райçутĕç пайĕнче ĕçлекенсен пĕтĕм составне пăхса тухма кăтарту панă. Павлăв çак кăтартăва пурнăçа кĕртсе пынă, — терĕ Новикăв йулташ.

Çакăнпа каçхи лару хупăнчĕ.

Çентабĕрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи лару

Чăваш парторганизацин облаçри XIX-мĕш конференцийĕн çентабĕрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕнче Обком тата ревизи комиççи отчочĕсем тăрăх пренисем пычĕç. Прение 14 çын тухса каларĕç.

Партин Шупашкар хула комитечĕн çекретарĕ Лапин йулташ хула комитетĕнчи политикăлла йăнăшсене палăртать. Епĕр, — тет вăл, — тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтересси çинчен каласна, тăшмансене малашне те тăрă шыв çине кăларса, нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырасси çинчен маннă. Парти ретне ӳстересси çинчен каласа, Лапин йулташ хула организацийĕ ку тĕлĕшпе кайа йулса пынине кăтартать. 1937—1938 çулсенче хула организацинче 118 çынна кандидата илнĕ, 79 çынна кандидатран члена куçарнă. Анчах рабочисене партине илес ĕç çителĕксĕр пырать. Типографинчи, кирпĕч, спирт тата тир-сăран савăчĕсенчи пуçламĕш организацисем Ленин—Сталин ĕçĕшĕн тăрăшса ĕçлекен йулташсене партине илес тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлеççĕ.

Шпакин йулташ (Канаш) партин йертсе пыракан органĕсене халăх тăшманĕсем кĕрсе кайса, партиче тата халăха хирĕç киревсĕр ĕçсем туни çинчен калать. Вăл Чăваш Обкомне транспăрт ĕçĕ çине уйрăмах тимлĕн пăхма ыйтать.

Козлов йулташ Куславкка комбинатĕнчи сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессе питĕ хуллен пынине кăтартать. Комбинат Атăл хĕрĕнче, анчах унта шыв çук, комбинатри йĕркесĕрлĕхсем çинчен рабочисем парти райкомне темиçе хутчен те пĕлтернĕ. Анчах райком çекретарĕ пулнă Пожеданăв йулташ рабочисен çырăвĕсем çине çавăрăнса пăхман.

— Обком бӳровĕ парти Тĕпкомĕн феврал-мартри пленумĕн решенине, çав пленумра Сталин йулташ кăтартса панисене тата йанварти пленумăн решенисене пурнăçа кĕртмен, тесе калать Зашчелкин йулташ (Кувакинă). Малала вăл Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссарĕн Йерышĕв йулташăн тата Госплан председателĕн Андрейĕв йулташăн çитменлĕхĕсене кăтартса парать.

Ивашкин йулташ (Улатăр) марксисăм-ленинисăм курсĕнче студентсене парти историне тĕрĕс вĕрентменни çинчен, унта студентсене халăх тăшманĕ Кузнецовăн сийенлĕ историйĕпе пăтраштарнине, буржуалă-националиссене мухтама вĕрентнине кăтартса парать. Вăл курс пуçлăхĕ пулнă П. Григорйĕв йулташăн политикăлă йăнăшĕсене критиклет.

Борзов йулташ (Сĕнтĕрвăрри) Аласта промышлĕннăçне вăйлатасси çинчен, стаханăвла йухăма организацилесе йертсе пырасси çинчен каларĕ.

Вăл шкулсенче тăшманла елементсене хирĕç кĕрешессине вăйлатма кирлине кăтартрĕ. Борзов йулташ партин Сĕнтĕрвăрри райком çекретарĕ пулнă Степанăвăн пысăк йăнăшĕсене кăтартса парса, ăна парти йенĕпе ответ тыттарма ыйтать.

Бочков йулташ (Кувакинă) парти Обкомĕн отчотĕнче Чăваш парторганизацин ĕçĕсене политикăлă тĕрĕс анализ пани çук, Обком бӳровĕ парти Тĕпкомĕн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртмен, тесе шутлать.

— Парти Обкомĕн политикла çулйĕрне тĕрĕс мар, практикăла ĕçне çителĕксĕр тесе хак памала тесе, сĕнӳ парать Карташов йулташ. Обком бӳро ĕçне çакăн пек хак пама конференцире тухса каланă йулташсен çирĕп сăмахĕсем çирĕплетеççĕ. Парти Обкомĕ хăйĕн кулленхи ĕçне пирĕн республикă умне парти Тĕпкомĕ лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн большевикла тивĕçлĕхпе кĕрешме пултарайман.

Чурилăв йулташ (ПСК(б)П Обкомĕ) парти, совет тата хуçалăх ĕçне лартнă çĕнĕ кадрсене вĕрентсе çитĕнтерессии çинчен калать. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Халăх Комиссарĕсен Совечĕн аппаратне тăшмансене (Захарăв т. ыт. те) лартса сăтăрла ĕçсем тунине кăтартса парать. Парти Обкомĕн бӳровĕ хăйне панă шанăçа пурнăçа кĕртме пултарайман.

Краснов (Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум председателĕн заместителĕ), Харитонăвă (Патăрйел райĕçтăвком председателĕ) йулташсем çĕнĕ кадрсене вĕрентсе çитĕнтерессии çине парти Обкомĕ тата Верховнăй Совет президиумĕ çийелтĕн пăхнине кăтартса пачĕç. Вĕсем З. А. Андрейĕвă йулташăн пысăк çитменлĕхĕсем çинчен, вăл двурушник Иванов мĕн хушнине пурнĕ те туни, унăн партине хирĕçле ĕçне пĕлсе тăни çинчен каларĕç.

Конференцире парти Обкомĕн йертсе пыракан парторгăнсен пайĕн заведуйушчийĕ Полтĕв йулташ тухса каларĕ. Анчах вăл хăйĕн сăмахĕнче Иванов Йетĕрнере тата парти Обкомĕнче тунă тăшманла ĕçсем çинчен нимĕн те каламарĕ.

Йулашкинчен парти Тĕпкомĕн инструкторĕ Козулайĕв йулташ сăмах тухса каларĕ. Çакăнпа пренисем пĕтрĕç. Ирхи лару хупăнчĕ.

Çентабĕрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи лару

Партин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ çентабĕрĕн 28-мĕшĕнче пулнă каçхи ларура ПСК(б)П Обкомĕн отчочĕ тăрăх Дубăв йулташăн йулашки сăмахне итлерĕ.

Конференци парти ОБКОМĔН ПОЛИТИКАЛЛА ÇУЛ-ЙĔРНЕ ТĔРĔС МАР, ПРАКТИКАЛЛА ĔÇНЕ ÇИТЕЛĔКСĔР, тесе хакларĕ.

Кун хыççăн конференци ревизи комиççин отчотне çирĕплетрĕ.

Каçхи ларура конференцине Шупашкар хулинчи пионерсем пырса саламларĕç.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Райком инструктӑрне пысӑк пулӑшу кирлӗ

ПСК(б)П райком инструктӑрӗнче 2 ҫул ӗҫлетӗп. Ҫав вӑхӑтра, организацилӗ партилӗ ӗҫсен хӑшпӗр опычӗсене пухса, коммуниссемпе партире тӑманнисен хушшинчи ӗҫсене вӑйлатма пуҫламӗш организацисене чылай пулӑшрӑм. Ӗҫлеме тытӑннӑ вӑхӑтра плансӑр ӗҫлесе пыраттӑм. Кайран райкомра ӗҫлекенсем пулӑшнипе тата парти пуҫламӗш организацисен, пӗччен коммуниссен, колхозсен ӗҫӗсемпе паллашсан планпа ӗҫлеме тытӑнтӑм.

Хаљхи вӑхӑтра ман участкӑра парти кандидачӗсен групи пӗрре, пуҫламӗш организаци пӗрре тата пӗччен коммуниссем 3 ҫын шутланаҫҫӗ. Участкипе пурӗ 13 коммунис тата 1 сочувствуйушчи. Организацилӗ партилӗ ӗҫре парти пухӑвӗсене ирттересси пысӑк тата ответлӑ ӗҫ тесе шутлатӑп епӗ. Парти пуҫламӗш организацинчи пуху коммуниссене политикӑлӑ воспитани паракан шкул пулса тӑрат̆. Ҫавӑнпа пухусене хатӗрлесси, вӗсенче хаљхи вӑхӑтри политикӑлӑ ыйтусем лартса кирлӗ таран тишкӗресси, коммуниссен сӗнӗвӗсенчен йышӑну тӑвасси ман ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆.

Пуху пулаччен 2—3 кун малтан пуҫламӗш организацине кайса докладчике районри тата йалти материалсемпе паллаштаратӑп. Ҫав вӑхӑтрах колхозра тата ытти участкӑсенче ӗҫсем мӗнле тӑнипе паллашатӑп. Иртнӗ пухура йышӑнса хӑварнисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе тухатӑп. Ҫак ӗҫсене тунӑ чух ытти коммуниссене те йавӑҫтаратӑп. Ҫапла хатӗрленнипе пухусем активлӑн иртеҫҫӗ, коммуниссем кирлӗ сӗнӳсем параҫҫӗ.

Кашни пуху умӗн, маларах пуху мӗн йышӑннисене мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен парторг пӗчӗк информаци тӑват̆.

Пуҫламӗш организацисенче пухусем кашни уйӑхра 1-мӗшпе 15-мӗш числисенче пулса пыраҫҫӗ.

Иртнӗ вӑхӑтра пуху йышӑннисем мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӗрӗслесси начарччӗ. Хаљ ҫав ҫитменлӗхе пӗтерсе пыратпӑр.

Пухусем ирттерес ӗҫре ҫитменлӗхсем те пур-ха. Акӑ, Патӑрйелӗнчи кандидатсен группинчи парти кандидачӗ А. Черкасӑвӑ пухусене ним хатӗрленмесӗрех пырат̆. Вӑл парти поручениисене те вӑхӑтра туса пымаст̆.

Пӗччен коммуниссем патне уйӑхра 2—3 хутран кая мар ҫитетӗп. Парти пурнӑҫне йавӑҫтарас шутпа, партипе правителствӑ йышӑннӑ постановленисемпе паллашса, партире тӑманнисене ӑнлантарма тата илемлӗ литературӑ вулама хушатӑп. Парти членӗ Ф. Ҫмирновӑ йулташа „Парти коммуниссен мӗн ыйтат̆" йатлӑ кӗнеке, парти членӗн кандидачӗсене Н. Софронӑвпа Доброхотӑв йулташсене „Лӑпкӑ Дон", тата „Спартак" кӗнекесене вулама сӗнтӗм. Вӗсем патне иккӗмӗш хут пырсан малтан хушса хӑварнисене мӗнле пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслесе ҫӗнӗ поручениисем парса хӑваратӑп. Ман участкӑрах Чӑваш АССР Верховнӑй Совет депутачӗ Ф. Ҫмирновӑ йулташ Вӑрӑм Хӑвари йалсовет председателӗ пулса 1934 ҫултанпа ӗҫлет. Вӑл нумайах вӗренмен, ҫавӑнпа епӗ ӑна ытларах пулӑшу паратӑп. Ф. Ҫмирновӑ Вӑрӑм Хӑва йалсоветне районра малти вырӑна кӑларнӑшӑн темиҫе хут та премиленӗ. Ҫавнашкал ҫитӗнӳсем Ф. Ҫмирновӑ йалти активпа лайӑх ӗҫленинчен килеҫҫӗ.

Парти хуҫалӑхне йӗркелӗ тытса усрасси парти докуменчӗсене улӑштарнӑ хыҫҫӑн лайӑхланчӗ. Патрекелти парти кандидачӗсен групи парти докуменчӗсене йалсовет ӗҫӗсемпе хутӑштарса йанисем пулнӑ. Хаљ протоколсем тата ытти документсем те уйрӑм шкафра выртаҫҫӗ. Пухусен протоколӗсене райкома тӑратасси те чылай йӗркеленчӗ. Кашни протокола пуху хыҫҫӑн пӑхса тухатӑп.

Пухусем пулнӑ чухне кашни коммунисӑнне парти билечӗпе кандидат картӑчки пуррине тӗрӗслесе пыратӑп. Пур коммунис та парти докуменчӗсене кирлӗ таран сыхлама вӗреннӗ теме ҫук-ха. Ман участкӑна кӗрекен коммуниссенчен Ҫ. Ҫмирнов кандидат картӑчкине пасарта ҫухатса хӑварнӑ, халӗ вӑл ҫӗнӗ картӑчкӑ илнӗ. М. Аникин паспӑрт илнӗ чух кандидат картӑчкине милицин районри уйрӑмне пӑрахса хӑварнӑ.

Марксисла-ленинла воспитани парас шутпа пур коммуниссине те кружоксене йавӑҫтарнӑ. Хаљхи вӑхӑтра ПСК(б)П Тӗпкомӗ ырласа кӑларнӑ ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне тӗплӗн вӗренме хатӗрленетпӗр. Вӑл историпе коммуниссем, комсомолӗцсем, сочувствуйушчисем малтанлӑха паллашаҫҫӗ.

Хӑшпӗр коммуниссем—К. Романӑв тата В. Гаврилӑв хайсен политикӑлӑ пӗлӳлӗхне хӑпартассипе начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсемех парти дисциплинине пасаҫҫӗ, ӗҫрех ӗҫкелеҫҫӗ.

Хамӑн ӗҫре комсомол пуҫламӗш организацисене те вӑйлӑ пулӑшу парса пыратӑп. Епӗ ӗҫлекен участкӑра 17 пуҫламӗш организаци шутланат̆. Йалсене пырсан комсоргсене ӗҫ планӗ тума пулӑшатӑп, пухусенче пулатӑп, комсомолӗцсене ӗҫлемешкӗн сӗнӳсем паратӑп. Ҫавӑн пек пулӑшни комсомолӗцсене халӑх хушшинчи политикӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе вӑйлатма пулӑшрӗ. Комсомолӗцсен хушшинчи дисциплинӑ та самай ҫирӗпленчӗ.

Комсомолӗц Т. Толстӑв тата Н. Софронӑв йулташсем парти ретне кӗчӗҫ.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ вӑхӑтри агитацилӗ ӗҫсен метӑчӗсене шута илсе, агитатӑрсене умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗрме мобилизацилерӗмӗр.

Политикӑлӑ ӗҫе стахановла йухӑмпа ҫыхӑнтарнӑ май, производствӑри ӗҫсем те вӑйланса карӗҫ. Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозри колхозницӑ Иринӑ Ивановӑ тырӑ вырнӑ чухне кунне 400 кӗлте вырӑнне 1115 кӗлте, Аннӑ Ивановӑ 1012 кӗлте ҫыхса пычӗҫ. Чапайӗв йачепе тӑракан колхозри Иголкин 1200 кӗлте ҫыхрӗ. „Комбайн" колхозри машинис Шилӑв 6 гектар вырӑнне 12 гектар вырса пычӗ. Ҫавӑн пек ӗҫлесе пынисем ытти колхозсенче те сахал мар.

Инструктӑр ӗҫӗ пысӑк, ответлӑ. Ман ӗҫре ҫитменлӗхсем те нумай-ха. Парти тата сочувствуйушчисен ретне ӳстерес ӗҫ питӗ начар тӑрат̆. Коммуниссем поручениисене пурнӑҫа кӗртсе пынине тӗрӗслесси ҫителӗклӗ мар. Кулленех хамӑн политикӑ пӗлӳлӗхне хӑпартасси те йапах.

Ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе ПСК(б)П райкомӗнчен пысӑк пулӑшу кирлӗ пулат̆.

Н. Андрейӗв.
Йелчӗк райком инструктӑрӗ.

Ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илетпӗр

КАНАШ. Педучилищӑри Осоавиахим организацинче 370 член тӑрат̆. Кӑҫал вӗренме кӗнисем пурте Осоавиахим членне кӗнӗ.

Пуҫламӗш организаци оборонӑ значокӗсене илме нормӑсем парас, ҫар ӗҫне вӗренес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлет. Хаљхи вӑхӑтра ПВХО значокӗ илнисем 200, ГСО значокӗ илнисем 130 тата „Ворошиловский стрелок" значокӗ илнисем 30 член шутланаҫҫӗ.

Ленинла-сталинла комсомол 20 ҫул тултарнӑ йубилейе Осоавиахим организацийӗ пысӑк ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илме хатӗрленет. Членсем пурте оборонӑ значокӗсен нормисене пама обйазателстӑсем илнӗ. Халӗ ку йенӗпе тӗрлӗ кружоксем ӗҫлеҫҫӗ. Осоавиахим пуҫламӗш организацин ҫар ӗҫне вӗренме кирлӗ пур хатӗрсем те ҫителӗклӗ.

Ф. Малышкин.

Билетсене улӑштарасси начар пырат̆

ЙӖПРЕҪ. Районра Осоавиахим членӗсен билечӗсене улӑштарасси питӗ йапах пырат̆. 53 пуҫламӗш организацирен пӗр организацире ҫеҫ улӑштарса ҫитернӗ. 17 организацире билетсене улӑштарас ӗҫе пуҫӑнман та.

Ӗҫ ҫакӑн пек пыни— районра Осоавиахим ӗҫӗ йапӑхса кайнине пӗлтерет. Сӑмахран, Епеҫри организацинче членсене ҫухатса пӗтернӗ. Кӑҫал членсемпе пӗр пуху та ирттермен. Член укҫи пухман. ОАХ райсовечӗ пуҫламӗш организацисен ӗҫне йӗркелеме тӑрӑшмаст̆. Осоавиахимӑн 12-мӗш лотерей билечӗсен укҫине тахҫанах пухса ҫитермеле пулнӑ. Апла пулин те Буинскӑри организацинче 200 тенкӗ, Упакассинчи—180 тенкӗ, Чурачӑкри—90 тенкӗ лотерей билет укҫине тӳлемен тата ытти те.

В. В.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Мускаври „Манометр" савӑтри призывник-стахановӗцсем, вӗсем оборонӑ значокӗсен нормисене панӑ. Сулахайран сылгӑмала: ҫӗнӗ токарнӑй цех маҫтӑрӗ комсомолӗц Д. Т. Буробин, инструмент цехӗнчи слесӑр комсомолӗц Г. А. Родин (нормӑна 240 проц. тултарса пырат̆), ремонт цехӗнчи слесӑр В. З. Бажебин (заданисене 210 проц. тултарса ӗҫлет) тата инструмент цехӗнчи токӑр В. П. Володин (нормӑна 5 хут ирттерсе тултарат̆).

А. Иоселевич фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото)

Агитатӑрсем

Хӗрлӗ Ҫар ретӗнчи агитатӑрсем вӗренӳре, стрелбищӑсенче, канура—пур ҫӗрте те хӑйсен ӗҫне чыслӑн тӑваҫҫӗ, тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Акӑ, агитатӑр Тарасӑв йулташа пур бойецсем те пӗлеҫҫӗ. Вӑл каласат̆, вулат̆ ҫеҫ мар, вӑл хӑй пуринщӗн те примерлӑ бойец-комсомолӗц. Унӑн пур дисциплинӑпа та „отличнӑ" паллӑсем. Вӑл бойецсене политзањатине хатӗрленме пулӑшат̆, конспектсем ҫырма вӗрентет.

Ҫак кунсенче бойецсем клубра „Профессор Мамлок" кинофиљм пӑхрӗҫ. Бойецсем кинофиљм ҫинчен нумай калаҫрӗҫ, картинӑ ҫинчен хӑйсен шухӑшӗсене пӗр-пӗрне каласа параҫҫӗ. Агитатӑр Монахӑв пайан Германи фашисӑмӗн тискерлӗхӗсем ҫинчен калаҫу ирттерчӗ, кинофиљм ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Бойецсем ӑна питӗ пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Пирӗн бойецсем час-часах хулари театрсене ҫӳреҫҫӗ. „Евгений Онегин", „Кавказский пленник", „Царская невеста", „Тихий Дон" операсене итлеҫҫӗ. Агитатӑр ҫак операсем ҫинчен калаҫа памалах вӗт. Политрук ротӑри чи лайӑх агитатӑрсене уйӑрат̆ те, кашнине уйрӑм темӑ парат̆.

Агитатӑр кашни кунах хаҫатри материалсем ҫинчен каласа парат̆. Агитатӑр тӗрлӗрен темӑсем тӑрӑх калаҫусем ирттерет. Агитатӑрсем пуҫарнипе бойецсем выставкӑсене, музейсене кайаҫҫӗ. Пирӗн халӗ „Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ флот 20 ҫул" выставкӑра пур бойец та пулнӑ. ССРС историне, парти историне вӗреннӗ май Ленин музейне тата истори музейне темиҫе те кайнӑ, вӗреннӗ. Красноармейӗцсем музейсенче хӑйсем ваљљи питӗ кирлӗ материалсем илеҫҫӗ, вӗсемпе зањатисенче уса кураҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫарта агитатӑрсем нумай, вӗсем куллен ӳсеҫҫӗ.

Кӗҫӗн командир Чижов политвӗренӳре чи малта пырат̆, вӗренӳ отличникӗ. Чижов Хӗрлӗ Ҫара ӗмӗрлӗхе йулма пулчӗ. Халӗ вӑл кӗҫӗн лейтенантсен курсӗнче вӗренет.

Агитатӑрсем ӗҫре ӳсеҫҫӗ, вӗсем пропагандиссем, групповодсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Агитатӑр Монахӑв халӗ групповод. Унӑн группинче начар паллӑпа вӗренекен бойец ҫук. Вӑл халӗ ҫар политикӑ училищине кайма хатӗрленет. Кӗҫӗн командир Зателепин— групповод, унӑн группинче пурте отличнӑ тата лайӑх паллӑпа ҫеҫ вӗренеҫҫӗ.

Епӗ те агитатӑр пулса ӗҫлетӗп. ССРС историне вӗренекен группӑра йертсе пыратӑп. ССРС историне ҫарта пӗррремӗш ҫул ҫеҫ вӗренеҫҫӗ. Бойецсем, командирсем историне питӗ пысӑк хаваслӑхпа вӗренеҫҫӗ. Вӗсем „Слово о полку Игорове", „Война и мир" произведенисене вулаҫҫӗ, вырӑс халӑхӗ хӑйӗн тӑшманӗсене ҫӗмӗрнӗ историне пӗлме тӑрӑшаҫҫӗ. Граждӑн вӑрҫи историне вӗреннӗ чухне те илемлӗ литература вулаҫҫӗ („Хлеб", „Кочубей", „Тихий Дон" т. ыт. те).

Хӗрлӗ Ҫарта агитатӑрсене час-часах семинарсене, лекцисене чӗнеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫарӑн Тӗп суртӗнче, институтсенче паллӑ профессӑрсем докладсем тӑваҫҫӗ, лекцисем ирттереҫҫӗ. Лекцисене агитатӑрсем пӗрмайах ҫӳреҫҫӗ.

Агитатӑрсене кулленхи ӗҫре политруксем пулӑшаҫҫӗ. Полк комиссарӗ те йаланах агитатӑрсемпе калаҫат̆, вӗсене вӗрентет, вӗсемпе канашлат̆.

Хӗрлӗ Ҫар кӑҫал хуласене, савӑтсене, колхозсене пиншер лайӑх агитатӑрсем, пропагандиссем парат̆. Вӗсем ҫарти пекех пысӑк хаваслӑхпа бољшевисӑм сӑмахне массӑ хушшине илсе пырӗҫ.

Агитатӑрсем вӑл чыслӑ ӗҫе тимлесех хатӗрленеҫҫӗ. Вӗсем кирлӗ кӗнекесем туйанаҫҫӗ, конспектсене йӗркелеҫҫӗ.

Хӗрлӗ Ҫар агитатӑрӗсем—пысӑк вӑй. Вӑл вӑй куллен-кун ӳсет, саралат̆.

Йев. Йени.
Мускав Ҫар Округӗ.

Куҫса ҫӳрекен йалав илчӗ

(Красноармейӗц ҫырӑвӗ)

Нумай та пулмаст Мускӑв Ҫар Округӗнче тактикӑла вӗренӳсем пулса иртрӗҫ. Вӗренӳсенче Округӗнчи Ҫар вӑйӗсем хӑйсен пысӑк ҫитӗнӗвӗсене кӑтартса пачӗҫ.

Уйрӑмӑнах Совет Сойузӗн Геройӗ Лакейӗв йертсе пыракан чаҫри аслӑ лейтенант—љотчик Сорокин подразделенинчи ҫитӗнӳсене кӑтартмала, љотчиксем, авиатехниксем, мотористсем хӑйсен пултарулӑхӗсене кӑтартса пачӗҫ. Ку подразделенинчи самољотсем „ҫапӑҫура" пӗр чӑрӑнусӑр ӗҫлесе „тӑшмансен" самољочӗсене тыткӑна илчӗҫ, вӗсене „пӗтерсе" пычӗҫ.

Тактикӑлӑ вӗренӳсем пӗтнӗ йатпа митинг пулса иртрӗ. Аслӑ лейтенант Сорокин подразделенийӗ вӗренӳсенче пысӑк ҫитӗнӳсем тунине шута илсе, подразделенине куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалав пачӗҫ.

Зах. Андрейӗв.

Дисциплинӑ ҫук ҫӗрте

Ҫыхӑну кантурӗ ҫумӗнчи (Шупашкар) комсомол комитечӗ комсомол ретне ҫӗнӗрен илнӗ ҫамрӑксене политикӑлӑ воспитани парас йенӗпе начар ӗҫлесе пырат̆.

Парти историне вӗренекен кружока 2—3 ҫын анчах ҫӳреҫҫӗ. Ҫак шутран комитет ҫекретарӗ Филиппӑв хӑй те ҫӳремест. Хӑшпӗр комсомолӗцсем хӑш кружока ҫӳремелине халӗ те пӗлмеҫҫӗ.

Член укҫине 5—6 уйӑх тӳлеменнисем те пур (Романӑв, Кривоносӑвӑ т. ыт.).

Комсомол комитечӗ ӗҫри прогулшчиксемпе, государствӑ укҫине ҫаратакансемпе кӗрешмен.

Прогулсем тунӑшӑн, ӗҫри дисциплинӑна пӑхӑнманшӑн администраци Хохлов диспетчӗре ӗҫрен кӑларнӑ, Фроловӑ шофӗре почтӑ машини ҫине ҫынсем лартса укҫине хӑй кӑсйине чикнӗшӗн ӗҫрен кӑларнӑ.

Ҫак ҫынсем пирки комсомол комитечӗ нимӗнле мерӑ та йышӑнман.

Л. Тимофейӗв.

Учителсем ССРС историне вӗренеҫҫӗ

Вӑрман Кипекри туллимар вӑтам шкул ҫумӗнче учителсем ваљљи йатарласа ССРС историне вӗренмели кружок организацилерӗҫ. Ку кружока истори преподавателӗ Г. Данилӑв йулташ йертсе пырат̆. Г. Данилӑв йулташ зањатисене лайӑх хатӗрленсе пырат̆. Халӗ икӗ зањати пулнӑ. Учителсем зањатисене пурте лайӑх хатӗрленсе пыраҫҫӗ.

М. Алексейӗв.

Райком инструктӑрӗн ӗҫӗсем ҫинчен

Верховнӑй Советсен суйлавӗсем массӑн политикӑлӑ хастарлӑхне вӑйлатрӗҫ. Ҫакна май парти аппарачӗн, уйрӑмӑн илсен — райком инструктӑрӗсен ӗҫӗсем те пысӑкланчӗҫ. Ҫӗнӗ, пысӑк йышлӑ активсен кадрӗ хутшӑнчӗ. Вӗсем политикӑпа идейӑ йенчен хӑвӑрттӑн ӳссе пыраҫҫӗ. Вӗсене ӳсме, вӗренме пулӑшмала, куллен-кун воспитани парса пымала. Ҫак активран нумайӗшне йертсе пыракан вырӑнсенче ӗҫлеме лартнӑ. Вӗсем инструктӑртан пулӑшу кӗтеҫҫӗ—вӗсем бољшевикла руководствӑ искусствине хӑвӑртрах вӗренесшӗн. Ҫапла вара инструктӑрӑн коммуниссене воспитани парас задачи нихҫанхинчен те ытла пысӑкланчӗ. Инструктӑр хӑйӗн ӗҫне принциплӑ, идейӑлӑ ҫӳлӗхре туса пырат̆ пулсан, вара унӑн ӗҫӗ парти кадрӗсене бољшевикла пиҫӗхме пулӑшат̆.

Инструктӑр ӗҫӗнче политикӑлӑ тӗллев, вичкӗнлӗх—ПСК(б)П Тӗпкомӗн феврал̆-мартри тата йанварти пленумӗсен решенисене пурнӑҫа кӗртессишӗн вӑл хӑй мӗн пек ҫине тӑрса кӗрешнинчен, Сталин йулташ ПСК(б)П Тӗпкомӗн феврал̆-мартри пленумӗнче кӑтартса панӑ программӑлӑ ыйтусене вӑл хӑй мӗн таран ӑнланса илнинчен, вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пынинчен килет.

Райком инструктӑрӗн, чи малтан, пуҫламӗш парторганизацисене фашисӑмӑн троцкисла-бухаринла, буржуалӑ-националисла агенчӗсен йулашкисене пӗтӗмпе пӗтерме, хуҫалӑхпа парти ӗҫӗнчи сӑтӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерме, йертсе пыракан вырӑнсене ҫӗнӗ кадрсене хӑйуллӑн лартса пыма, коммуниссене партирен кӑларнӑ чухне тунӑ йӑнӑшсене тӳрлетме пулӑшасси пулат̆.

Инструктӑрӑн хӑйӗн умӗнче тӑракан политикӑлӑ задачсемпе тан пырас тесен, нихҫан та парти решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӑтӑшах тӗрӗслесе пыма кирли ҫинчен манма йурамаст̆.

Пуҫламӗш парторганизацисенче йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртнине тӗрӗслес ӗҫе организацилеме инструктӑрӑн пур майсем те пур. Кунта ҫак задача куҫран ҫухатманни ҫеҫ кирлӗ.

Инструктӑр лайӑх ӗҫлени—пуҫламӗш парторганизацисене райком йенчен оперативлӑ идейлӑ, пысӑк пахалӑхпа йертсе пыма май парат̆. Апла пулсан та, чылай ҫӗрте инструктӑрӑн ӗҫне хакламанни те пур-ха. Ҫавӑн пекех, инструктӑрсен ӗҫӗнче те ҫитменлӗхсем сахал мар.

Райком инструктӑрӗсен ӗҫӗнче тӗп ҫитменлӗх вӑл—ӗҫре ҫистемӑ ҫукки, тӗп ыйтӑва йарса илме, вӑл ыйту ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхма пӗлменни пулат̆. Час-часах инструктӑр пур ӗҫсене пӗр харӑс йарса илме пӑхат̆. Кун пек чухне вара вӑл кулленхи ыйтусен ытамне кӗрсе ӳкет. Вара вӑл пуҫламӗш парторганизаци ҫитменлӗхӗсене регистрацилекен ҫын вырӑнне кӑна пулса тӑрат̆. Ҫакӑн пек инструктӑр час-часах коммуниссен пурнӑҫӗпе ӗҫӗнчи чи ҫивӗч ыйтусене асӑрхамасӑр йулат̆. Ҫак ҫитменлӗхе, коммуниссен пурнӑҫне, пуҫламӗш парторганизацисен уйрӑмлӑхне лайӑх пӗлнипе кӑна пӗтерме пулат̆.

Инструктӑр парти членӗсемпе таччӑн хутшӑнса ӗҫлесен ҫеҫ (партком ҫекретарӗсемпе ҫеҫ мар) пуҫламӗш парторганизацин чӑн-чӑн пурнӑҫне, унӑн ыйтӑвӗсене, унӑн ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене пӗлме пултарат̆. Анчах хӑшпӗр инструктӑрсем парти массипе хутшӑнса ӗҫлессине парти пухӑвӗсенче кӑна пулмала пек ӑнланаҫҫӗ. Ку ҫеҫ ҫителӗклӗ мар. Ҫынсемпе уйрӑмӑн хутшӑнмала, уйрӑм коммуниссемпе пӗрле пулмала. Инструктӑрӑн ӗҫӗнче тӗп вырӑнта парти членӗ, ӑна идейӑ йенчен хӗҫпӑшаллантарасси, унӑн производствӑри, обшчӗствӑпа политикӑ пурнӑҫӗнчи малти вырӑнне хӑпартасси пулмала, — тет Л. М. Каганович йулташ.

Инструктӑрсен ӗҫне лайӑхлатас йенӗпе пӗр-пӗрин ӗҫӗнчи лайӑх опытсемпе паллашмала туни питех те кирлӗ.

Мускав хулинче райком инструктӑрӗсем чылайӗшӗ, критикӑна хисепе илсе, хӑйсен ӗҫӗсене ҫӗнетрӗҫ. Ҫавӑн пек, Ленинградски райком инструктӑрӗ Филиппӑв йулташ ӗҫлекен участкӑна 18 пуҫламӗш парторганизаци кӗрет, вӗсенче 600 коммунис. Вӑл пур партком ҫекретарӗсене, парторгсемпе вӗсен заместителӗсене, парти активне лайӑх пӗлет. Пӗчӗкрех организацисенче вӑл пӗлмен коммунис те ҫук. Вӑл кашни пуҫламӗш парторганизацин уйрӑмлӑхне сӑнаса вӗренсе тухнӑ, вӗсенче партилӗ-политикӑлӑ ӗҫсене мӗнле организацилеснине пӗлет. Ҫакӑн пек тума вӑл пуҫламӗш парторганизацисенче ытларах пулнипе, вӗсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫленипе пултарнӑ.

Метрори 19-мӗш дистанцинче сатӑрла ӗҫсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе нимӗн те туман пулнӑ. Филиппӑв йулташ ҫакӑнти аҫлӑ инженерӑн политикӑлӑ сӑн-пичӗ пирки иккӗленме пуҫлат̆. Вӑл вара ҫак строителствӑри пӗтӗм хуҫалӑх ӗҫне тӗпрен тӗрӗслесе тухмала тӑвас ыйту лартат̆. Ҫакӑн хыҫҫӑн райком строителствӑна квалификацилӗ комиҫҫи йарат̆. Комиҫҫи аслӑ инженер тӑшман пулнине палӑртат̆, ӑна хупса лартаҫҫӗ.

Чылай пуҫламӗш парторганизацисенче парти членӗсене идейӑ йенӗпе хӗҫпӑшаллантарас ӗҫ начар пынӑ. Филиппӑв йулташ ҫакӑн пек пулни мӗнрен килнине сӑнаса вӗренме тытӑнат̆. Вӑл час-часах кружок зањатисенче пулат̆, пропагандиссен ӗҫне, вӗсен преподавани методикине сӑнат̆, вӗренекенсемпе калаҫат̆. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл акӑ мӗнле вывӑд патне пырса тухат̆: парти вӗренӗвӗ начар пыни пропагандиссем начар ӗҫленинчен килет, вӗсем зањатине начар хатӗрленеҫҫӗ. Парткомсем йенчен те пропагандиссене йертсе пырасси ҫителӗксӗр пулнӑ.

Филиппӑв йулташ хӑй участкине кӗрекен пӗтӗм пуҫламӗш парторганизацисенчен партком ҫекретарӗсемпе парторгсене, пропагандиссене райкома пухат̆, унта вӑл икӗ пропагандис докладне итлесе сӳтсе-йавмала тӑват̆. Вӑл пропагандиссемпе партком ҫекретарӗсене вӗсен ӗҫӗнчи вӑйсӑр вырӑнӗсене туйса илме, ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтермели майсем йышӑнма пулӑшнӑ.

Филиппӑв йулташӑн ҫак опычӗ уйрӑмах халӗ, ПСК(б)П историйӗн ҫӗнӗ курсӗ тухнӑ хыҫҫӑн пысӑк вырӑн йышӑнат̆. Халӗ ӗнтӗ парти историне вӗренесси нихҫанхинчен те ытла вӑйланса кайат̆. Ҫакӑ вӑл парткомсен йертсе пырас ӗҫне те пысӑклатат̆. Пропагандиссен ӗҫне тӗрӗс йертсе пырас пулат̆, кружоксен ӗҫне контроль туса пырассине организацилес пулат̆. Кунта те инструктӑрсем нумай пулӑшу пама пултараҫҫӗ. Вӗсен тӗп ӗҫӗ парти историне вӗренес ӗҫе тивӗҫлӗ вырӑна лартасси пулат̆.

ПСК(б)П Сокољнически райком инструктӑрӗн Йанин йулташӑн ӗҫӗсем ҫинчен те каласа памала пулат̆.

Йанин йулташ уйрӑмӑнах партине ҫӗнӗ членсем илес ӗҫ начар пыракан пуҫламӗш парторганизацисем ҫине хытӑрах пӑхат̆. Кун пек организацисем унӑн группинче 6. Вӑл ҫакна палӑртнӑ: пуҫламӗш парторганизацинче партине илмели резервӑсем пур, анчах вӗсенче сочувствуйушчисемпе партире тӑман актив хушшинче ӗҫлесси начар тӑрат̆.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Йанин йулташ ҫак организацисенчи партком ҫекретарӗсемпе парторгсене парти ӳсӗмӗ ҫинчен сӳтсе-йавма канашлӑва пухат̆. Ҫак канашлура вӑл ӗҫри тӗп ҫитменлӗхсене палӑртса, малашне мӗн тумали ҫинчен каласа панӑ. Канашлу хыҫҫӑн вӑл каллех ҫак организацисенче пулат̆, вӗсен ӗҫӗсене тӗрӗслет, кирлӗ пек канашсем парса, ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме пулӑшат̆. Ҫакӑн хыҫҫӑн ӗҫсем лайӑхланма пуҫлаҫҫӗ. Йулашки вӑхӑтра 6 организацирен 5-шӗнче чылайӗшне партине илнӗ.

Йанин йулташ ҫавӑн пекех тата, отчотпа суйлав пухӑвӗсенче парткомпа парторг ӗҫӗсене ҫителӗксӗр тесе хак панӑ пуҫламӗш парторганизацисем ҫине хытӑ пӑхат̆. Ҫавӑн пек туни вӑл питех те кирлӗ. Пирӗн начар ӗҫлекен организацисем ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмала, вӗсене ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме ҫине тӑрса пулӑшмала, ура ҫине тӑратмала, малала йамала. Вӗсене пирӗн ҫитес суйлава пур йенчен те лайӑх ӗҫлекен организаци туса ҫитермеле. Йанин йулташ ҫак задача ӑнланса илнӗ. Ку ӗҫре вӑл хӑшпӗр ҫитӗнӳсем те тума пултарнӑ. Паллах, ку ӗҫӗн пуҫламӗшӗ кӑна-ха, малашне тата тӑрӑшсах ӗҫлемеле пулат̆.

Йанин йулташ парти хуҫалӑхӗн ыйтӑвӗсем ҫине те тимлӗн пӑхат̆. Вӑл парткомсемпе пуху протоколӗсене пурне те вуласа тухат̆. Протоколра йӑнӑш решенисем пулсан, пӗтӗмӗшлӗ решенисем пулсан, вӑл хӑй патне партком ҫекретарне, йе парторга чӗнет, ӑна кирлӗ пек кӑтартусем парат̆.

Йанин йулташ йенчен ыйтӑва тепӗр хут пӑхса тухса йӑнӑша тӳрлетме протоколпа резољуцине пуҫламӗш парторганизацине таварса панисем те пулаҫҫӗ. Ҫавӑн пек, „Трудосвязь" ертел ҫумӗнчи парторганизаци промфинплана тултарманни ҫинчен ыйту пӑхса тухнӑ чухне пӗтӗм ӗҫе „обйективлӑ" сӑлтавсем ҫине йӑвантарнӑ пулнӑ. Йанин йулташ сӗннӗ тӑрӑх, пуҫламӗш парторганизаци ҫак ыйтӑва тепӗр хут пӑхса тухнӑ, хӑйӗн малтанхи решенийӗ йӑнӑш пулнӑ тесе йышӑннӑ. Ҫӗнӗрен йышӑннӑ решенире пуху промфинплана тултарас ӗҫре чӑрмантарса тӑракан сӑлтавсене пӗтерме конкретлӑ майсем йышӑннӑ.

Райком инструктӑрӗн ӗҫӗ ответлӑ та нумай йенлӗ. Райком ҫекретарӗсен инструктӑрсене парти ӗҫӗн практикине ҫеҫ вӗрентмеле мар, тата вӗсен идейлӑхне вӑйлатас, куљтурӑлӑхне хӑпартас ӗҫре те ҫине тӑрса пулӑшса пымала, кашни инструктӑра уйрӑмӑн вӗрентмеле. Ҫакӑн пек тусан анчах райком инструктӑрӗ пуҫламӗш парторганизацисене йертсе пырас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсене ӑнсӑлӑн туса пыма пултарат̆.

И. М. Андрейӗв.
ПСК(б)П Мускав хула комитечӗн парткадрсен пайӗн пуҫлӑхӗн заместителӗ.

Государствăн Оренбургри çелекци станцинче облăçăн районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсене йама суртлă ыраша михĕсем çине тултарса документаци тăваççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (малта)—вăрлăх ĕрчетес ĕç пайĕн техникĕ В. В. Пичугина тултарнă михĕсене пломбăлать.

В. Йелагин фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Кĕрхи çĕртме тăвассине вăйлатмала

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кĕрхи çĕртмене октаберĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтермеле тесе хушса хăварчĕ. Анчах, Йĕпреç районĕнче кĕрхи çĕртме тăвас ĕç пит йапăх пырать. План тăрăх, 10 пин гектар çинче кĕрхи çĕртме тумала. Çентаберĕн 26-мĕшне трактăрсемпе 1856 гектар, лашасемпе 510 гектар çеç сухаланă, йе плана 20 процент ытларах кăна тултарнă.

Райçĕрĕç пайĕнче тата машинă-трактăрлă станцинче ĕçлекенсем колхозсене кĕрхи çĕртме тăвас йенĕпе йертсе, пулăшса пымаççĕ.

Районра хăшпĕр колхозсем кĕрхи çĕртме тума пачах тытăнман. „Социализм", „11 лет Чувашии", „Çĕнĕ пурнăç" тата „Двигатель революции" колхозсем пĕр гектар та сухаламан.

„Красный водник" колхоз кĕрхи çĕртме планне 54 процент, „Большевик"—32 процент, „Çиçĕм"—23 процент, „Хĕрлĕ металлист" колхоз 16 процент çеç тултарнă.

В. Вишневский.

Ăмăртса ĕçлекен колхозсенче

Тушкасси (Йетĕрне р.) йалсоветне кĕрекен Володарский йачĕпе тăракан тата „Октабĕр" колхозсем авăн çапса пĕтерсе, тырпулсене ампарсемпе складсене хыврĕç. Государствăна тыра парса татнă. Пахча-çимĕçсене пуçтарса, çĕрулмине уйран кăларса кĕнĕ.

Икĕ колхозĕнче те колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх аванс шучĕпе тыра валеçсе панă.

Володарский йачĕпе тăракан тата „Октабĕр" колхозсем кăсал пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлерĕç. Ăмăртса ĕçлени тата пĕр-пĕрне тăтăшах тĕрĕслесе тăни йалхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра та тĕплĕн туса пыма пулăшрĕ.

Хальхи вăхăтра ăмăртса ĕçлекен колхозсенче хĕрсех кĕрхи çĕртме тăваççĕ. „Октабĕр" колхозра 161 гектар сухаланă.

Т. Йемелйанăв.

Литературăпа музыкă вечĕрĕ

Партин Шупашкар райкомĕпе районти „Ленин çулĕпе" хаçат редакцийĕ пуçарнипе çентаберĕн 26-мĕшĕнче Кӳкеçре литературăпа музыкă вечĕрĕ пулса иртрĕ. Вечĕра районти художествăлă пултарулăх вăйĕсене те анлăн хутшăнтарнă.

Малтанхи пайра Шупашкартан пынă чăваш поечĕсемпе писатĕлĕсем (Уйăп Мишши, Тукташ, Ивник, Йанкас, Усли Васлейĕ, Митта Петĕрĕ, Чулкас, Малгай, Зинă Митрофанăвă) хăйсен сăввисене вуласа пачĕç.

Иккĕмĕш пайра районти пултарулăх вăйĕсем тухрĕç. Рай-хаçат çумĕнчи литкружок членĕсем—Й. Абакшин, Д. Йегорăв, Çентимĕр т. ыт. йулташсем хăйсен çĕнĕ сăввисене тухса вуларĕç. 600 ытла йурă пĕлекен ватă йурăçă Г. Федăрăв йулташ çĕнĕ йурăсем кĕвĕлет. Унăн вечĕрта йурласа панă çĕнĕ йурри професçионаллă композитăрсен йуррисенчен пĕре те кайа мар, çав тери илемлĕ, ĕлĕк пусмăрта тертленсе пурăннă, халĕ сталинла тапхăрта телейлĕ те хаваслă пурнăçпа пурăнакан чăваш халăхĕн вĕçĕмсĕр савăнăçне палăртса паракан паха йурă.

Çавăн пекех, Иван Макарăв чăваш халăхĕн авалхи музыкăлă инструменчĕпе—шăпăрпа выльаса кăтартнă йурă-кĕвĕсем, А. Федăрăвпа (кĕслепе) Т. Алексейĕв (скрипкăпа) пĕрле выльанă кĕвĕсемпе йурăсем куракансене килĕшӳлĕ пулчĕç.

Вăрман хатĕрлевĕ

Механисăмсемпе туллин усă курмала

Республикă III-мĕш кварталти вăрман хатĕрлев планне касса хатĕрлессипе срукчен, ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Çентаберĕн 25-мĕшне касса хатĕрлес плана—163,6 процент тултарнă. Плана тултарман пĕр вăрманпромхоз та, механизациллĕ вăрманпунктĕ те çук.

Анчах турттарас йенĕпе ĕçсем ытла та начар пыраççĕ. Плана тултарисем [illegible] вăрманпромхоз [illegible] (Шупашкар тата Шăмăршă), виçĕ вăрманпромхозĕ (Улатăр, Кирс, Йĕпреç) кварталĕн планне 60 процент та тултарайман. Улатăр вăрманпромхозĕ 48,5 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Вăрманпромхозсем начар ĕçленине тĕрлĕрен сăлтавсем çине йăвантарма çук. Лайăх, тухăçлă ĕçлеме пур условисем те пулнă. Анчах вăрман ĕçĕнчи работниксем малтан пусса илнĕ лăплăха сирсе йаманнипе, мĕшĕлтетсе ĕçлессине халĕ те чăсса пынипе турттарас ĕçре улшăнусемех тăваймарĕç. Улатăр вăрманпромхозĕ пилĕк кун хушшинче те турттарассипе 5,4 процент çеç ӳсĕм тунă. Çавăн пекех çентаберĕн 20-мĕшпе 25-мĕш хушшинче Кирс вăрманпромхозĕ—3,3 процент, Йĕпреç—3,9 процент, Çĕмĕрле — 6,3 процент кăна ӳсĕм тума пултарнă.

Механисăмсемпе турттарасси те пайанхи куна çав тери начар пырать. Республикĕпе илсен квартал планне 56,9 процент çеç тултарнă. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех механисăмсемпе çителĕклĕ таран усă курманнинчен килнĕ. Турттарнă çĕрте 47 машинă ĕçлемеле пулсан, 35 машина, хăшпĕр кун унтан та сахал ĕçлет. Соловйовскри механизациллĕ сул çинче 7 машинă ĕçлемеле, ĕçлет—4. Çавна пула ĕнтĕ вăл III-мĕш кварталта 22.500 кубла метр турттарса [illegible] кубла метр турттарса, плана 32,3 процент çеç тултарнă. Кирс, Кăмаша, Канаш, Сăр çулĕсем çинче те механисăмсемпе кирлĕ таран усă курмаççĕ. Машинсем çĕмĕрĕлсе кайсан чылай вăхăт хушши йусамасăр лартаççĕ.

Вăрман хатĕрлев ĕçне пайанхинчен темиçе хут лайăхлатма пур майсем те çитеççĕ. Халĕ ĕнтĕ ĕç вăйĕ çителĕксĕр теме çук. Вăрманта йалан ĕçлекен кадрсене пухса çитересси, автотрактăр паркĕпе туллин усă курасси, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене татах та лайăхлатасси, культмассăлă ĕçе вăйлатса, Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва анлăн сарса пырасси—çакăн пек задачсем тăраççĕ халĕ вăрман ĕçĕнчи работниксен умĕнче.

Кĕркуннехипе хĕллехи вăрман хатĕрлевĕ

ЙĔПРЕÇ. Вăрманпромхоз виççĕмĕш кварталти вăрман хатĕрлев планне çентаберĕн 25-мĕш тĕлне касса хатĕрлессипе— 140 процент, турттарса кăларассипе 57,4 процент пурнăçа кĕртнĕ.

Малта пыракан колхозсем виççĕмĕш кварталта та лайăх ĕçлерĕç. Шăнкăртам районĕнчи „Звезда" колхоз квартал планне касса хатĕрлессипе 170 процент, „Ударник" колхоз 152 процент, турттарса кăларассипе—176 процент тултарнă. Çавăн пекех „Хĕрлĕ Октабĕр" колхоз та квартал планне 115 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах вăрман ĕçне кайала туртса пыракансене те асăнмасăр иртсе кайма çук. Акă, Канаш районĕнчи Чкалăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Йаранский йул. чылай вăхăт хушши „вăрман ĕçлеме çак кунсенчех йаратăп", тесе суйса пурăнать. Пайан кун та çак колхозран вăрманта пĕр çын ĕçлемест.

Автотрактăр паркĕ виççĕмĕш квартал планне çентаберĕн 25-мĕшне 56 процент çеç тултарнă. Кашни кун 10 автомашинă ĕçлес вырăнне 6 çеç ĕçлеççĕ, ыттисем ремонтра, йе тата кăкармалисем çуккипе ĕçсĕр лараççĕ. Çавна пула трактăрсемпе 10 пин кубла метр турттарса кăларас вырăнне, 3010 кубла метр çеç турттарса кăларнă. Кунта стахановецсен паха примерĕсене ытти рабочисем хушшине сарасси тивĕçлĕ вырăнта мар, стахановецсене ĕçре сахал пулăшаççĕ, вĕсене малашне тата аванрах ĕçлеме кирлĕ условисем туса паман.

Вăрманпромхозра 1938—39 çулти кĕркуннехипе хĕллехи вăрман хатĕрлевне хатĕрленесси начар пырать. Вăрманта йалан ĕçлекен кадрсене пухса çитересси, вăрманта ĕçлеме колхозсемпе йалсенчен ĕç вăйĕ пухасси йапăх тăрать. Ку тĕлĕшпе вăрманпромхоз работникĕсем тин çаврăнкалама пуçланă. Вăрманта ĕçлеме кадрсем тупса, вĕсемпе договăр тумала, анчах договăр бланкисем çук. Куншăн Чăваш вăрманпром та айăплă, вăл договăр бланкисене çентаберĕн 24-мĕшĕнче çеç йарса панă, вăл та пулин çителĕксĕр.

Рабочисем пурăнакан çуртсене йусама тата çĕнĕрен тума панă укçапа çуррипе те усă курман. Рабочисем пурăнакан çуртсене йусасси вăрахăн пырать. Хураçырма вăрман пункчĕн 46 мĕш кварталĕнче çĕнĕрен пекарньă, ларйок, столовăй, 130 çын вырнаçмалăх 4 çурт, пăчкă хăйрамали пункт тата мунча тума пăхнă. Вĕсенчен рабочисем пурăнмали 2 çуртне, ларйокпа пекарньне туса пĕтернĕ, анчах кăмакисене туман.

Ĕç хатĕрĕсем те çителĕклĕ марха. Пăчкă хăйрамалисем, 100 витре, 10 бак, 100 пуртă çитмеççĕ.

Вăрманпромхоз руководителĕсен „вăхăт пур-ха" тесе лармă йурамасть. Хатĕрленӳ ĕçĕ тимлĕн пымала. Ăнăçлăн ĕçлесси пĕтĕмпех лайăх хатĕрленнинчен килет.

Дм. Михайлăв.
Гл. Марушĕв.

Октабĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăрту

Нихăçан пулман паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ

КАНАШ, çентаберĕн 27-мĕш. (Хамăр корреспондентран). Вакунсем йусакан савăтри рабочисем, стахановецсем Октабĕр революцийĕн 21 çул тултарнă уйав умĕнхи ăмăртăва хутшăнса производствăра çав тери паха примерсем кăтартаççĕ. Çентаберĕн 25-мĕшĕнче çаврăк токарĕ Володазкий йулташ çĕнĕ рекорд турĕ. Вăл çак кун 4 [illegible] 11 мăшăр хăйрарĕ. Çак çурт ĕçлекен Лукойанăвпа Александрăв йулташсем те йулашки вăхăтра 10—12 мăшăр вакун урапи хăйрама пуçларĕç.

Ăмăрту ытти цехсенче те саралсах пырать. Урапа цехĕнчи стахановец Мурдайкин йулташ кашни кунах нормăна 300 процент, електросварщик Пичкалов йулташ—288 процент тултараççĕ. Палла стахановец Гладков йулташ август планне 447 процент тултарса 767 текке ĕçлесе илнĕ. Халĕ те нормăна 440 процентран кайа мар тултарса ĕçлет.

[illegible] хушшинчи ăмăртура Алексейĕвпа Табаков йулташсем малта пыраççĕ. Алексейĕв йулташ кулленхи нормăна 250—400 процент, Табаков 340 процент тултараççĕ.

М. Иакимăв.

Бригадăсем ăмăртаççĕ

Шупашкарти строителствăра рабочисем Октабĕр революцийĕ 21 çул тултаракан паллă уйава çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра бригадăсем пурте ăмăртăва хутшăннă. Кашни бригадă хăй çине уйрăм обйазательства илнĕ.

Çентаберĕн малтанхи çурăйăхĕнче Савченко йулташ йертсе пыракан бригадă плана 214 процент, Блохин йулташ бригади 185 проц., Йаманăв йулташ бригади 158 проц. тултарчĕç. Октабĕр уйавне хатĕрленнĕ май вĕсем ĕç тухăçлăхне татах та ытларах хăпартма, пахалăха лайăхлатма, простой, брак тăвассине пачах пĕтерме пулаççĕ.

В. Дмитрийĕв.

Строителствă планĕ тулса пымасть

(Виççĕмĕш участкă)

Çак кунсенче чукунçул строителствинчи инженерла-техниклă работниксен, стахановецсен, бригадирсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура стахановла çирĕмкунлăх мĕнле пыни çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Участкăсенчи çулйĕр маçтăрĕсем каласа панă тăрăх, строителствă ĕçĕ çав тери йеррипен пырать. Ĕç хатĕрĕсем, материалсем çитмеççĕ, дисциплинă йапăх, учотпа отчот ĕçне те кирлĕ пек йĕркелемен. Çавна пула хăшпĕр ĕçсем тăрăх плана çурри те тултарман. Акă, сăмахран, Трак разйесĕнех илер. Кунта пĕтĕмпе 12 пин кубла метр хăйăр турттармала пулсан, çентаберĕн 24-мĕшне пĕтĕмпе те 1.584 кубла метр çеç турттарнă, 6 комплект стрелкă провăчĕ лартас вырăнне пĕрре те лартман.

Виççĕмĕш участкăра та графикăра кăтартнă ĕçсене чылайĕшне пурнăçламан. Çак стахановла çирĕмкунлăх хушшинче участкăн 21 километр тăршшĕ планировкă тумала пулсан, вăл мĕн пурĕ те 8 километр тăршшĕ çеç тунă, стрелкă лартассипе плана 45,4 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Канашлура тухса калаçакан йулташсем çав çитменлĕхсем пĕтĕмпех кирлĕ таран материал, ĕç вăйĕ пулманнинчен килнине, управленинче ĕçлекенсем йапăх ĕçлесе пынине палăртрĕç.

— Пирĕн екскаватăр час-часах çĕмĕрĕлсе кайать, йусама кирлĕ пайсем çук. Кунсăр пуçне тата час-часах вутă пулмасть. Çавна пула ĕнтĕ епĕр плана 40 процент çеç тултарнă. Анчах руководителсем кун çинчен лайăх пĕлеççĕ пулин те, ĕçе лайăхлатассишĕн тăрăшмаççĕ,—тет екскаватăрпа ĕçлекен Молчанăв йулташ.

Строителствăра лайăх ĕçлекен рабочисем, стахановецсем те сахал мар. Акă пĕрремĕш участкăра лини хывнă çĕрте ĕçлекен Колбасов йулташ бригади кашни кун плана 144,5 процент тултарса ĕçлет. Бригадă членĕсем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ, кашнийех нормăсене тултараççĕ. Комсомолецсем: Иевдокимăв тата Федăрăв йулташсем йалан плана 160 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Анчах стахановецсен паха опычĕсене сарассипе участкă начальникĕсемпе маçтăрсем, партипе профсойуз организацисем йапăх ĕçлеççĕ. Вĕсем кашни çынна мар, бригадăсен ĕç тĕслĕхĕсене те пĕлмеççĕ. Ишлей разйесĕнчи çулйĕр маçтăрĕ Жданăв график йеппе пурнăçа кĕрсе пынине, уйрăм ĕçсем тăрăх план йеппе тулса пынине те пĕлмест. Канашлура пулнисем çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерсе, чукунçула срукра вăхăтлăх експлоатацине пама пулчĕç.

Р. Йемелйанăв.

ВЛ. БЕЛЬАКОВ

С. М. Кирăв музейĕ

Революцин иртнĕ çулсенчи традицийĕсене тасан сыхласа усракан Ленин хули революцин вилĕмсĕр трибунĕн, партин паллă ывалĕн—С. М. Кирăвăн чаплă памйатникĕпе пуйанланчĕ.

Кшесинскайа çуртĕнче, историйĕ революцилĕ мухтавлăхпа палăрса тăракан çуртра, ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннипе çак кунсенче С. М. Кирăв музейĕ уçăлать.

Музейăн аслă залĕсенче—талантлă организатăрăн, пирĕн партин паллă руководителĕн, пролетарилĕ революцин çулăмлă трибунĕн чаплă пурнăçĕ çинчен, унăн ывăнма пĕлми пархатарлă ĕçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен калакан документсемпе материалсене тăратнă.

Музейăн пĕрремĕш залĕ Сергей Миронăвичăн пĕчĕк ача чухнехи тата çамрăк пулнă чухнехи çулĕсем çинчен каласа парать. М. Г. Платунов художник ӳкернĕ картинă çинче пысăк мар провинци хулине—Уржума кăтартнă. Ку хулара Сергей Миронăвич çуралнă. Кунта, „пĕчĕк тăлăх-туратсен çуртĕнче", вăл хăйĕн савăнăçсăр пулнă ачалăх çулĕсене ирттернĕ. Фотографи çинче—вăл вĕреннĕ шкул. Çак хуларах вăл революци ĕçĕпе тата социал-демократсемпе паллашать. Вара вăл Томск хулине куçса кайать. Томскра çамрăк Кирăв хăйне пĕтĕмпех революци ĕçне парать. Акă, пысăккĕш йенчен пĕчĕкçĕ, анчах ăшчикĕпе пуйан, РСДРП Томск комитечĕн листовкисем, вĕсене 1904 çулта С. М. Кирăв пуçарăвĕпе çырнă тата салатнă. Вĕсем—патша самодержавине хирĕç кĕрешме питĕ хытă чĕнеççĕ.

Н. Н. Рйабинин художник ӳкернĕ картинă çинче Кирăва вăл 1905 çулта Томскра рабочисен хĕçпăшаллă демонстраци пуçĕнче пынине кăтартнă. Кунтах—Кирăв организациленĕ вăрттăн типографи макечĕ, ку типографинче РСДРП Томскри организацин листовкисене пичетлесе тăнă.

Çамрăк Кирăв марксла литературăна пикенсех вĕренет, вăл—Ленин çырнă „Что делать?", Маркс çырнă „Капитал", Коммунисла манифест тата ыт. кĕнекесене вулать.

1907 çултан пуçласа 1917 çула çитичченхи тапхăра çавăрса илекен иккĕмĕш залра—патша жандармерийĕ Кирăва мĕнле хĕсĕрлесе тăнине кăтартса паракан документсем. Кунта—Томскри тĕрмен çекретлă корпусĕн фотоӳкерчĕкĕ пур. Кирăв кунта икĕ çулталăка йахăнах—1906 çулти августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1908 çулти ийунĕн 29-мĕшĕччен ларнă.

Томскра типографи пĕтсе ларнă хыççăн Сергей Миронăвич Кирăв, вăрттăн, Кавказа куçать. Кунта вăл хăйĕн революцилĕ ĕçне малалла туса пыма пуçлать. Документсемпе фотографисем Кирăвăн Кавказ халăхĕсене самодержавипе кĕрешме организацилес йенĕпе тунă ĕçсене кăтартаççĕ.

1917—1918 çулсен тапхăрĕнче Сергей Миронăвич Кавказра Совет влаçĕ тăвассишĕн тата ăна çирĕплетессишĕн Владикавказра йепле вăйлă кĕрешнине виççĕмĕш залри документсем каласа параççĕ. Кунта—Советсен Пĕтĕм Российăри иккĕмĕш сйесĕ çинчен тата Октаберти социалисăмлă революци çинчен Сергей Миронăвич тунă доклада пичетленĕ хаçатсене те курма пулать.

Музейăн тăваттăмĕш залĕ—1919—1920 çулсен тапхăрĕ. Вăл—Астрахань крайĕнчи Вăхăтлăх Революцилĕ-Çар Комитечĕн председателĕ пулнă чухне Кирăв йепле хĕрӳлĕ кĕрешни çинчен каласа парать. Çав тапхăрта пролетариатăн çулăмлă революционерăн организатăрла таланчĕ йар-уççăнах курăнать. Шургвардейецсен бандисем тата интервентсем йĕри-тавра çавăрса илнĕ Астрахань йăвăр вăхăтсем пурăнса иртернĕ. Иудă-Троцкий пуç пулса йертсе пыракан предателсем Астрахăне тăшман аллине пама сĕнни. Сергей Миронăвич 11-мĕш çарăн Революцилĕ-Çар Совечĕпе пĕрле сутăнчăклă троцкисла директивăна Ленин умĕнче протесленĕ. Астрахăне пĕтĕм вăйпа хӳтĕлеме, „вĕсне çитиччен кĕрешес политикăна питĕ те çирĕп пурнăçа кĕртме кирли çинчен" Ленин кăтартнине—Кирăв чыслăн пурнăçа кĕртнĕ.

„Астрахань крайĕнче пĕр коммунист та пулин пур чухне, Атăл шывĕн вĕçĕ совет аллинче пулнă, халĕ те совет аллинче тăрать тата малашне те совет аллинче пулĕ" —çапла ответленĕ С. М. Кирăв Ленин директивине. Нумай документсем — тăшманпа кĕрешес тĕлĕшпе Вăхăтлăх Революцилĕ-Çар Комитечĕ туса ирттернĕ ĕçсене кăтартса параççĕ.

Музейăн пиллĕкмĕш залĕнче Кирăвăн 1920—1921 çулсенчи, вăл меньшевикла Грузипе Совет çĕршывĕн полпречĕ вырăнĕнче ĕçленĕ чухнехи ĕçĕсене кăтартнă. Ленин патне йанă висĕ çырура (вăл çырусем музейре пур) Сергей Миронăвич Врангĕле Совет влаçĕпе кĕрешме пулăшса тăракан Грузири меньшевикла правителствăн контрреволюцилĕ политикине тăрă шыв çине кăларать. Сергей Миронăвич халăх тăшманĕсемпе—троцкисемпе йепле пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе пынине кăтартакан интереслă документ та пур кунта. 1921 çулти февралĕн 10-мĕшĕнче тухнă „Коммунист" хаçатра пичетленĕ отчот, Владикавказ облаçĕнчи пĕрремĕш партконференцинче Кирăв йулташ профсойузсен вырăнĕсем çинчен тунă докладра Ленин йулташăн платформине хӳтлени çинчен каласа парать. Конференцире, Троцкий тезисĕсене хӳтлесе, троцкист сăмах тухса каланă. Прениссем пĕтнĕ хыççăн конференци чи нумай сасăпа—майлă 160 çын пулнă, хирĕç — 8 пулнă, Ленин йулташ платформи çумне пĕрлешнĕ. Çак залрах—С. М. Кирăвăн „дипломатилĕ" коçтумĕ, унăн дипломатилĕ паспăрчĕ, папкă пур; ку папкăра вăл Ленин тата Сталин патне йанă çырусен копийĕсене сыхласа усранă.

С. М. Кирăвăн 1921—1925 çулсенче Бакура пурăннă тапхăрти пурнăçĕпе ĕçĕсене музейăн улттăмĕш залĕнче кăтартнă. Закавказйери республикĕсене Закавказйе федерацине пĕрлештерессишĕн, нефтшĕн, хуçалăх фронтĕнче Ленинпа Сталинăн директивисене пурнăçа кĕртессишĕн Кирăв мĕнле кĕрешнине çак залри нумай документсем уççăн кăтартса параççĕ.

1926 çулта, ПСК(б)П Партин 14-мĕш сйесĕ хыççăн, парти Кирăва Ленинграда çĕнĕ ответлă ĕçе йарать. Музейăн пилĕк залĕсенчи питĕ нумай документсем, фотографисем, картинăсем, çырусем Сергей Миронăвич пурнăçĕн Ленинградри тапхăрĕ çинчен тĕплĕн каласа параççĕ.

Троцкисла-зиновйĕвла бандă пирĕн партире раскол тума, Ленинградри парторганизацине ленинла-сталинла Тĕпкомран уйăрма хăтланчĕ. Троцкисла-зиновйĕвла предателсене çĕмĕрсе тăкма парти Кирăва йарать. Канма-ывăнма пĕлмесĕр, вăйĕпе сывлăхне шеллемесĕр, Сергей Миронăвич активлă ĕçсем сарса пырать, парти тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешет. Вăл парти организацисен сывлăхне—хапрăксемпе савăтсене кайать. Кашни кун пекех Ленинградри предприйатисенче çулăмлă трибунăн хĕрӳлĕ сăмахĕсем йанăрарĕ. Вăл партин XIV-мĕш сйесĕн историлĕ решенине ăнлантарса парать. Пирĕн тăван çĕршывра ĕлĕкхи пек тепĕр хут помешчиксемпе капиталиссен сторйĕ туса хума хăтланнă троцкисла-зиновйĕвла бандитсене вăл çав тери хытă çĕмĕрсе такать.

1926 çулта районсенчи чрезвычайлă партконференцисенче тата кĕпĕрнери XXIII мĕш партконференцинче Кирăв сăмах тухса каланине пĕлтерекен отчотсем—документсем (отчотсене „Ленинградская правда" хаçатра пичетленĕ), тухса каланă сăмахсен тезисĕсене çырнă блок-нот листокĕсем, фотографисем, картинăсем—ывăнма пĕлмен большевикăн, талантлă организатăрăн, аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕн образне уççăн кăтартса параççĕ. Ленинградра тата облаçра çĕнĕ предприйатисен строителстви ĕçне—Волховстрой, Беломорканал, апатит промышленăçĕн центрĕ пулса тăракан Химногорск хули (халĕ вăл Кировск йатлă),—Сергей Миронăвич тӳррĕмĕнех хутшăнса йертсе пынă. Вăл хапрăксене тата савăтсене кайса çӳрет. Час-часах ăна çĕнĕ стройкăсенче, çĕнĕ столовăй, çĕнĕ савăт, рабочисем валли пурăнмали çуртсем уçнă çĕртре курма пулнă. Пур çĕртре те вăл рабочисене тата инженерла-техниклă работниксене хавхалантарнă.

Рабочисем ăна питĕ хытă йуратнă. Индустриализаци фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем туни çинчен пĕлтерес тесе, вĕсем ун патне пысăк савăнăçпа васкаса кайнă. Кирăв патне йанă çырусем тата рабочисен парнисем музейре темĕн чухлĕ. Акă—логарифмăсĕн пĕчĕк линейки. Ун çине çапла çырнă: „Ленинградри пролетариатăн йуратнă çулçуçне Сергей Миронăвич Кирăва Краçин йачĕпе тăракан „Сойуз" хапрăкĕнчи рабочисенчен тата инженерла-техниклă работниксен коллективĕнчен. 1933 çулти майăн 1-мĕш. Çĕнĕ производствăра тунă".

Йулашки икĕ зал—траурлă залсем. Вилĕ пит çинчен ӳкернĕ маскă çине, рабочи организацисен венокĕсем çине, пысăккăн хурланине тата йăвăр çухатушăн чĕререн куляннине палăртакан çырусем çине хумханмасăр пăхма çук. Партин йуратнă çынни, пĕтĕм совет халăхĕн йуратнă çынни, хаклă Мироныч вилĕ тенине ĕненес те килмест. Чĕре—çак чаплă пурнăça пĕтерсе хунă фашисла çынвĕлерекенсене тарăхнипе, вĕсене курайманнипе тулать.

Тата темиçе кунтан музейри експонатсене курма çынсем килĕç. Темиçе мĕлйун çынсем большевик революционерăн çутă та йулăн пурнăçне çав тери пысăк интереспа вĕренĕç, Сталин йулташăн шанчăклă соратникĕ—Сергей Миронăвич Кирăв кĕрешĕвĕ тата çĕнтерĕвĕ пек кĕрешме те çĕнтерме вĕренĕç.

Йевропăри хăрушă лару-тăру

Чехословаки правительстви Гитлĕр меморандумне йышăнман

Чехословаки правительстви Гитлĕр меморандумĕ çине мĕнле пăхни çинчен Прагăра официаллă пĕлтерӳ кăларнă. Çĕнĕ план,—тенĕ пĕлтерӳре,—Германи территорийĕ çумне чехсем нимĕç халăхĕнчен 434 пин çын ытла пурăнакан вырăнсене çыпăçтарма шутлат̆. Меморандум кунпа çеç чарăнса тăмаст̆, вăл тата чехсем 1.116 пин çын, нимĕçсем пурĕ те 144 пин анчах пурăнакан районсенче те плебисцит (пĕтĕм халăхран ыйтса тухни) иртерме ыйтат̆. Çав вăхăтрах Гитлĕр хăйĕн планĕ тăрăх Германи çумне çыпăçтарма шутлакан Чехословаки халăхне гаранти парасси çинчен асăнма та шутламан. Палла, Германи хăй территорине кĕрекен поႇаксемпе Лужски сербсене нимĕн йĕркесĕр хĕсĕрлет.

Гитлĕрăн çĕнĕ планĕ Чехословакин пĕтĕм хăмла промышлĕннăçне, вăрманĕсене çаратма шутлат̆. Чехословакин чылай йенчен тимĕр-тăмăр, пир-авăр, кĕленче, пĕтĕм керамикă, хими индустрийĕсĕр тăрса йулмала пулат̆. Çаканта вара Чехословаки халăхĕн чухăнланса йулмала пулат̆, ĕççĕрлĕх, емиграци вăйланмала пулат̆. Çыхăну йенчен илсен, пĕтĕм республикă татăк-кĕсĕке вакланса нимĕн çыхăнусăр тăрса йулат̆.

Гитлĕр меморандумне йышăнни республикăна çар ĕçĕсем йенчен те ĕлсăр тăратса хăварат̆. Кун пек пулсан, Чехословаки правительствин сăртлă районсене, чикĕри чылай районсене парса пĕтермеле пулат̆. Чехословаки государстви Словакин хĕвелтухăç йенчи пайĕпе ахаႇ те ансăр хĕсĕк вырăнпа кăна çыхăнса тăрат̆. Малашне вара Чехословаки государствин вăйлă кӳрĕше—Германине пăхăнса тăмала пулат̆, мĕншĕн тесен унăн, çар индустрипе чикĕри тĕреклетнĕ районсенчен, чылайĕшне çухатмала пулат̆.

Гитлĕр меморандумĕ Чехословакине економикă йенчен те, политикă йенчен те вăйсăрлатса хăварат̆, çапла вара вăтам Йевропăри çĕршыва пĕтĕмпех Германи йенчен йăрса илмеле тăват̆.

Чехословаки правительстви Гитлĕр меморандумне нихăш йенчен те йышăнмаст̆.

Чехословаки правительстви Гитлĕр меморандумĕ пирки кăларнă çырăва Лондăнра пичетлесе кăларнă.

Гитлĕр меморандумне пăхса тухнă хыççăн, — тенĕ çырура,— Чехословаки правительстви çакăн пек вывăд патне пырса тухрĕ: Гитлĕр меморандумĕ вăл никама та пăхăнса тăман государствăна паракан сĕнӳ мар, парантарнă халăха паракан йышши уႇтиматум пулат̆.

Çырăван йулашки пайĕнче: Чехословаки правительстви хыттăнах пĕлтерет: Гитлĕр ыйтнисене нихăш йенчен те йышăнма çук. Правительствă çак вырăнсăр хайар требованисем пирки пур майсемпе те хирĕç тăмала тесе шутлат̆, вăл малашне çапла тăват̆ те ĕнтĕ. Правительствă çакăн пек килсе тухнă сехетсенче Англипе Франци Чехословакине пулăшасса шанат̆, тенĕ.

(ТАСС).

Чехословаки фашисла агрессăра хирĕç отпор пама хатĕрленет

Гитлĕр вăрçăпа тухма хатĕрленни Чехословаки халăхне паллă. Германи çарĕсем çитес кунсенчех вăрçă пуçласа йамала, тесе шутлаççĕ Чехословакире. Чехословаки çарĕпе халăх çакăн пек кĕтмен çĕртен инкек сиксе тухасран сыхланма хатĕрленеççĕ.

Правительствă пурне те тивĕç ĕç повиннăçĕ çинчен саккун кăларнă. Кунпа пĕрлех, çĕршыври пĕтĕм економикă пурлăхне йĕркелесе тăмашкăн, республикă економикин Аслă Советне тăвасси çинчен постановлени йышăннă.

Прагăран Германи журналисĕсене пурне те кăларса йанă. Çавăн пекех генлейнăвцăсемпе çыхăну тытнăшĕн Францин Гавас телеграф агентствин икĕ корреспондентне кăларса йанă.

Чехословаки хаçачĕсем пурте сывлăшран килсе тапăнма пултарнинчен хӳтленмелли майсем тата сывлăшран бомбăсем пăрахнă чухне мĕн тумали çинчен кăларнă инструкцине пичетленĕ. Прагă хулинчи пур парксене те траншейăсем чавса тухнă. Унта халăх тăшман сывлăшран килсе тапăнассинчен тарса пытанма пултарат̆.

Прагă халăхĕ хăйне-хăй уйрăмах организацилĕ тата дисциплинăллă тытат̆. Çарта тăшман тапăнасран сыхланас шухăшсем вăйлă. Пĕр салтак-нимĕç радио тăрăх каланă чухне Долорес Ибаррури „чĕркуççи çинче пурăнассинчен ура çинче тăрса вилесси лайăхрах“ тесе каланине илсе кăтартнă. Çак лозунг ытларах та ытларах Чехословаки халăхĕн лозунгĕ пулса тăрат̆.

(ТАСС).

Англипе Франци хăйсен планĕсене çĕнĕрен улăштарма хатĕр

Франци пичечĕн çведĕнисем тăрăх, Чемберлен Гитлĕр патне çыру йанă. Çырура—Чемберлен урлă Чехословаки правительствине панă Гитлĕр меморандумне Англипе Франци йышăнманни çинчен каланă.

Франци тата Англи Чехословаки проблемине татса парас тĕлĕшпе Англипе Франци хушшинче тунă плана йышăнаççĕ, анчах çав вăхăтрах вĕсем çав плана хăшпĕр улăштарусем кĕртме хатĕр тăраççĕ.

(ТАСС).

Гамелен Гортпа тĕл пулнă

ЛОНДĂН, çен̆таберĕн 26-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францири нацилĕ оборонă штабĕн начаႇникĕ генерал Гамелен пайан имперéн генераႇнăй штабĕн начаႇникĕ Горт генерал патĕнче апат тунă. Апат хыççăн Гамелен Гортпа тепре курнăçнă, çакăн хыççăн вара вăл Франци посоႇствинче Франци çарĕн експерчĕсемпе калаçнă.

Саар облăçĕнчи халăх хăраса ӳкнĕ

Германирен пĕлтернĕ тăрăх, вăрçă пулас хăрушлăх ӳссе пынă май, Франципе чикĕленсе тăракан Саар облăçĕнчи халăхсен чи сарлака сийĕсем питĕ хытă хăраса ӳкнĕ. Халăх банксене тата перекет кассисене пырса капланат̆. Перекет кассисене хунă укçасене кайала питĕ сахал параççĕ.

(ТАСС).

Рузвеႇт чĕнсе каланине хирĕç Бенеш панă ответ

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш Рузвеႇт чĕнсе каланине хирĕç панă ответа пичетлесе кăларнă. Бенеш, халႇхи вăхăтри кризиса „вăйпа марႇ ахалех йĕркелесе йама май пурри çине шанса, хăйĕн ответĕнче çапла пĕлтернĕ: „Чехословаки çине тапăнас-мĕн пулсан, Чехословаки нацийĕ хăйне хӳтлĕ“,—тенĕ.

(ТАСС).

Германи карапĕсем Вăтаçĕр тинĕсе пынă

ЛОНДĂН, çен̆таберĕн 27-мĕш. Сентрал Ньйус агентствин корреспонденчĕ Танжертан пĕлтерет: темиçе кун кайала Германин çар карапĕсем Вăтаçĕр тинĕсне нумайăн пынă.

(ТАСС).

Германипе Поႇшă провокацилĕ майсемпе тапăнусем тăваççĕ

Чехословакин çурçĕр тата хĕвеланăç йенчи чиккисенче Германи çарĕсем, охранниксемпе штурмовиксен чаçĕсем пысăккăн малала куçса пырасси чарăнмаст̆-ха.

Генлейнла „легионерсем“, штурмовиксемпе охранниксем провокацилĕ майсемпе Чехословаки чиккисем çине тапăнассине халႇ те туса пыраççĕ. Чылай вырăнсенче чикĕ çине тапăнакансем пулеметсенчен пенĕ тата гранатăсем ыратнă. Вĕсем Чехословакин пограничникĕсене тата жандармисене вăйпа ирĕксĕрлесех Германи территорийĕ çине илсе кайнине те палăртнă. Çавăн пек пырса тапăннă чухне 8 чеха амантнă тата тăваттăшне вĕлернĕ пулнă. *Фашисла наႇотчиксем йенчен те çухатусем пулнă.*

Ун пек выступленисене Чехословакипе Поႇшă хушшинчи чикĕре Поႇшăн фашисла бандисем те тунă. Чески Тешинра 224 гранатă, сиктерсе йаракан йапаласем 78 килограм, 41 автоматлă винтовкă тата ытти хĕçпăшалсене те тупнă. Вĕсем Поႇшăра тунăскерсем пулнă.

Поႇшă пичечĕ Чехословакине хирĕçле кампанийе вăйлăн туса пырат̆.

(ТАСС

Лигă наци пленумĕнче

ЖЕНЕВĂ, çен̆таберĕн 26-мĕш. (ТАСС). Пайан ирхине Лигă наци пленумĕн комиççийĕсен ларăвĕсем пулнă. 15 сехет те 30 минутра пленум пухăннă, унта Гаагăри пĕтĕм тĕнчери трибуналăн членне суйланă. Çакăн хыççăн комиççисем ĕççене малала туса пынă.

ЖЕНЕВĂ, çен̆таберĕн 26-мĕш. (ТАСС). Пиллĕкĕмĕш комиççин докладĕнче çакна палăртнă: вăрçă вăхăтĕнче çамрăк ачасене хӳтлес проблемă йулашки çул хушшинче çивĕчленсе кайнă. Испани делегацийĕ сывлăшран бомбăсем пăрахнипе хĕрарăмсем йепле асапланни çинчен комиççисене каласа панă. Доклад çакна палăртнă: Испани делегацийĕ ССР Союзĕпе Франци тата ытти çĕршывсен представителĕсене, вĕсем Испани ачисене уйрăм çемйесенче йе ачасен колонийĕсене вырнаçтарнăшăн, тав тунă.

ЖЕНЕВĂ, çен̆таберĕн 26-мĕш. (ТАСС). Улттăмĕш (политикăллă) комиççире пайан каçхине Лигăн генераႇнăй çекретарĕн отчотĕнчи Испани тĕлĕшпе калаçкан пайне сӳтсе-йавма пуçланă. Испани премйер-министрĕ Негрин йут çĕршывсенчи доброволĕцсене республикăлă Испанирен илсе тухса кайассине контроႇ туса тăрас тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери комиççине тума сĕннине хăшпĕр государствăсен представителĕсем Испанири ĕççене хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен Лондăнри комитета пăма палăртнă. Аႇварес дел Вайо çакна хирĕç тухса каланă. „Испани правительстви,—тесе каланă Аႇварес дел Вайо,—ку ыйту тĕлĕшпе вăл Лигă нацине пăхса тухма панине вырăнлă тесе шутлат̆. Ку ыйтăва Лондăнри комитет татса пама пултарайманнине çакă та кăтартса парат̆: йут çĕршывсенчи „волонтĕрсене“ Испанирен илсе тухса каймали çинчен тунă Лондăнри плана Испани правительстви пĕр сăмахсăрах йышăнчĕ. Унтанпа икĕ уйăх иртрĕ тата вăл плана пăлхавçăсем айаккала сирнĕрен вара пилĕк ерне иртрĕ. Анчах Лондăнри комитет çак положенине сӳтсе йавассине тума пултарайман“. „Кунсăр пуçне, çавăн пек сĕнĕве Лондăнри комитета парас тенинчен ытла, Испани правительствине унта чĕнмен те, анчах Германипе Итали правительствисене чĕннĕ, Испанири ĕçсене йут çĕршывсен интервенцийĕ хутшăннăшăн пĕтĕм ответлăх вĕсем çинче пулат̆, тĕлĕнмелли урăх мĕн пур-ши?,—тесе ыйтнă дел Вайо“.

Испанири фронтсенче

Çен̆таберĕн 26 мĕшĕнче хĕвелтухăçри фронтра Ебро йуханшывĕ районĕнче лăпкă пулнă. Левант фронтĕнче республиканĕцсем фашиссен Бегис районĕнчи тапăнăвне сирсе йанă (Теруеႇрен кăнтăр-хĕвелтухăçнеле).

Центрти фронтра Виႇйафранк районĕнче, Кордовăран çурçĕр-хĕвелтухăçнеле, республиканĕцсен çарĕсем пăлхавçăсен чылай позицисене тата икĕ высотана йышăннă.

Кордовăран çурçĕр-хĕвелтухăçнеле республиканĕцсем фашиссен темиçе контратакисене сирсе йанă.

Кăнтăр фронтĕнче улшăнусем çук.

(ТАСС).

СПОРТ

„Темп“ команди полуфинала тухрĕ

Футбол вăййипе республикăри малти вырăншăн пына вăйăра Шупашкарти „Спартак“ тата „Темп“ командисем тĕлпулса малтанхи хут выႇаçан, вăйă 3:3 шутпа пĕтнĕччĕ. Çавăнпа та çак вăйă тепĕр хут выႇама тиврĕ. Çен̆таберĕн 24-мĕшĕнче пулнă вăйăра „Темп“ команди „Спартак“ командине 3:1 шутпа çĕнтерсе финала тухрĕ. Финаллă вăйă çен̆таберĕн 30-мĕшĕнче Канаш хулинче пулса иртет. Ку кун Улатăрти „Локомотив“ командипе Шупашкарти „Темп“ команди тĕл пулса выႇаççĕ.

* * *

Йĕпреçри „Спартак“ команди Çĕрпӳ хулинчи сборнăй командăпа выႇанă. Вăйăра спартакăвĕцсем çĕрпӳсене 4:3 шутпа çĕнтернĕ. „Спартак“ команди финала тухнă.

* * *

Çен̆таберĕн 27-мĕшĕнче „Спарçак“ обшĕствин стадионĕнче „Темп“ тата „Буревестник“ командисем футболла выႇарĕç. Вăйă 4:3 шутпа „Темп“ команди çĕнтĕрнипе пĕтрĕ.

* * *

Баскетбол. Халĕ баскетбол вăййипе хулари малти вырăна тухассишĕн ăмăрту пырат̆. Çен̆таберĕн 27-мĕшĕнче „Спартак“ обшĕствин иккĕмĕш командипе „Учитель“ команди выႇарĕç. Вăйăра „Учитель“ команди 6:2 шутпа çиĕле тухрĕ.

Чи лайăх стахановĕцсене—йертсе пыракан вырăна

Чăваш вăрманпромсойуз çистемине кĕрекен 7 промертел 1938 çулти малтанхи 8 уйăх хушшинчи производства планне 103 процентран пуçласа 151 процент таран тултарнă. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Сотникăвăри промертел (правлени председателĕ выдвиженĕц Корнилăв йулташ) 139 процент, Турхан районĕнчи Кив Еĕпеçри промертел (правлени председателĕ выдвиженĕц Васĭлйев йулташ) 151 процент тултарнă.

Пĕтĕмĕшпе илсен, Чăваш вăрманпромсойуз çистеми йенĕпе 8 уйăхри производствă планне 120,2 процент тултарнă.

Нумай пулмаст̆ вăрманпромсойуз çистеминче пулса иртнĕ отчотла кампани ертелсене плансене боႇшевикла тултарассишĕн кĕрешме пултарайман, стахановла йухăма сарса пыма кансĕрленĕ çынсенчен тасалма нумай пулăшрĕ. Халႇ чи лайăх стахановĕцсенчен чылайĕшне, выдвижени йĕркипе, йертсе пымали ĕççене лартнă: промертел правленин председателĕсем пулса ĕçлеме 7 çынна, производствă пуçлăхĕ тата техноруксем пулса ĕçлеме—10 çынна, промертелсенче куႇтçут ĕçĕпе ĕçлеме 13 çынна лартнă.

Совет Союзĕ тăрăх

Пĕртăван Михейĕвсен тата Телевнăйсен танк взвочĕ

Пĕр çул кайала тăван çĕршывăн паллă патриочĕ Дмитрий Федăрăвич Михейĕв ыйтнипе пĕртăван Михейĕвсен танклă екипажне тунă пулнă. Мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çамрăк бойецĕсем—Павел, Федăр, Иван тата Владимир Михейĕвсем пиксенсех вĕреннĕ, çар ĕçĕн çăмăл мар искусствине çине тăрсах çĕнтерсе пынă, вара часах хăйсен танкне вĕсем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнчи танксенчен чи малта пыраканĕ туса хунă.

Халĕ чаплă екипажран танклă взвод тунă. Унта—Михейĕв патриотсем, пĕртăван Телевнăйсем тата ыт. кĕнĕ. Командир пулма лейтенант Хаႇавка йулташа лартнă.

Нумай пулмаст танк взвочĕ çĕрле пăшалтан пенĕ. Задачăна отличнă паллăпа тултарас тесен 400 метрлă хушăран виççĕ тĕл персе тивертмеле пулнă. Пĕртăван Телевнăйсем тата Михейĕвсем 5—6 тивертнĕ.

Взвод персе тивретнине отличнăран та ытла хак панă.

(ТАСС).

Столицăри перекет кассисенче

Мускаври ĕççыннисем перекетлекен укçа-тенкĕ хисепĕ çулран çулах ӳссе пырат̆. 1931 çул пуçламăшĕнче столицăра пурăнакансем перекет кассисенче 6ђ мĕлйун тенкĕ тытса усранă. 1938 çулти çен̆таберĕн 1-мĕшне перекет кассисенчи вкладсен йулашкийĕ 15 хут ӳснĕ, 965 мĕлйун тенке çитнĕ.

Халႇхи вăхăтра перекет кассисене 1.178 пин москвич укçа хунă. 1931 çулта кашни вкладчик пуçне вăтамăн 86 тенкĕ тивнĕ пулсан, халႇхи вăхăтра—822 тенкĕ тивет.

(ТАСС).

Ленинград—Мускав—Ленинград маршрутпа хăвăрт вĕççе тухнă рейссем

ЛЕНИНГРАД, çен̆таберĕн 26-ш. (ТАСС). Граждăнла сывлăш флочĕн Çурçĕр управленийĕ „ПС-40“ самоႇотсемпе Ленинград—Мускав—Ленинград трассăпа хăвăрт вĕçмели рейссем организациленĕ. Çавăн пек ултă рейс тунă та ĕнтĕ. Самоႇотсем рекордлă вăхăт хушшинче—1 сехет те 45 минутра—2 сехетре — ку трассăпа хăвăрт илсе çитермели груз турттараççĕ.

Пайан Ленинградран Мускава пур рейссенчен чи пысăк груза 994 килограма 1 сехет те 55 минут хушшинче илсе çитернĕ. Самоႇота Никифăрăв ႇотчик тытса пынă.

Çывăх вăхăтра Ленинград — Мускав—Харькăв—Тбилиси линийĕ çинче почтă самоႇочĕсен рейсĕсене организацилеме палăртаççĕ.

„Иосиф Сталин“ пăрçĕмрен Чеႇускин сăмсахĕ патне кайат̆

„ИОСИФ СТАЛИН“ ПĂРÇĔМРЕН БОРЧĔ, çен̆таберĕн 26-мĕш. (ТАСС). Пăрсемпе вăйлăн кĕрешсе корпусăн тата механизмсен пысăк пахалăхне кăтартнă хыççăн, пăрçĕмрен Лаптĕвсен тинĕсĕпе Чеႇускин сăмсахĕ патне çул тытнă. Пайан ирхине вăл пăрсăр шывсем çине тухнă. Сăмсахран 200 миႇăра, 78.5 градус широтара тата 120 градус хĕвелтухăç долготара пыратпăр.

Чеႇускин сăмсахĕнче зимовкă ваႇႇи кăмрăк антарса хăваратпăр. Вара пăрçĕмрен Диксон утравĕ йеннеле кайат̆, унта вăл борт çинчи, В. А. Попов ႇотчик йертсе пыракан авиазвенон виçĕ самоႇотне çыран çине антармала. Хĕллехи навигаци уçăлсан ку самоႇотсем Игаркăна вĕççе кайаççĕ. Вĕсенчен кашнийĕ çинче радиостанци тата вĕçев приборĕсем пур.

Диверсант—станци дежурнăйĕн ролĕнче

Сас-Тӧбе станцине (Турксиб) пассажир пуйăсĕ пысăк хăвăртлăхпа çывхарнă. Станцăри дежурнăй Додушĕв пуйăса иккĕмĕш çул çине йышăннă. Вăл лини çинче Чимкент деповĕнчи машинисăн Бендус йулташăн пăравусĕ тăнă пулнă. Çав уçă мар линипе пăравус ытклайса килнине асăрхасан, Бендус йулташ хыпăнса ӳкмен, вăл хăй пăравусне хăвăрттăн ĕçлетерсе, ăна станцăран айаккала илсе кайнă. Пуйăса авари пуласинчен хӳтлесе хăварнă.

Следстви тупса палăртнă тăрăх, Додушĕв диверсант пулнă, вăл йут государствă разведкин заданийĕсем тăрăх ĕçлесе тăнă.

(ТАСС).

„Родина“ самоႇот çинчен пĕлтерни

Çен̆таберĕн 27-мĕшĕнче „Родина“ самоႇот ăстине тупайман. Ăна халႇ те шыраççĕ-ха.

(ТАСС).

КĔСКЕН

** Çен̆таберĕн 20-мĕшне Совет Сойузĕнчи колхозсемпе совхозсем çĕрмамăк пуçтарас çулталăк планне 26,4 процент тултарнă. Чи нумай мамăк акса тăвакан республикăра—Узбекистанра плана 26,7 процент тултарнă—пĕлтĕр çав вăхăт тĕлне 7,7 процент тултарнă пулнă.

** Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пилĕк уйăх хушши пулнă хыççăн, красноармейĕцсен йуррисемпе ташшисен ССР Сойузĕнчи хĕрлĕ йалавлă ансамбႇ çен̆таберĕн 26-мĕшĕнче Мускава таврăннă. Пилĕк уйăхра ансамбႇ 450 концерт панă. Вĕсене—бойецсем, командирсем, çамрăк хуласен строителĕсем, Хасан кӳлли районĕнче çапăçура пулнисем, колхозниксем итленĕ.

** Аслă Октăбĕрти Социалисăмлă револႇуци 21 çул тултарнă уйав тĕлне Мускав облăçĕнчи колхозсенче, чи çĕнĕ киноаппаратурăпа тунă калаçакан кино-театрсем 60 уçăлаççĕ.

** Пир-авăр промышлĕннăçĕнче ĕçлекен рабочисем хăйсем ваႇႇи уйрăм суртсем тума 12 мĕлйун тенкĕ кивçен укçа илеççĕ. Кивçене —çурт хакĕн 70 процентне параççĕ. Иванăвă облăçĕнче рабочисем кăçал 1.880 çурт туса лартаççĕ.

● Черлакск районĕнчи (Омск облăçĕ) „Боႇшевик“ колхозри колхозниксем кăçал пысăк тухăçлă тырă туса илнĕ. Пĕр ĕçкунĕ пуçне кунта 15 килограм тĕштырă тата 2-шер тенкĕ укçан памала. Иван Степанăвич Степаненко колхозник çемйи ĕçкунĕсемшĕн 33.000 килограм тырă тата 4.400 тенкĕ укçа илет.

● Днепропетровск облăçĕнчи йалсемпе колхозсенче çĕлемелли маçтерскойсем 239 шутланаççĕ. Кăçалхи çул вĕсем 24 мĕлйун тенкĕлĕх заказ пурнăçа кĕртнĕ. Çывăх вăхăтра облăçри районсенче татах 80 маçтерской уçăлат̆.

(ТАСС).

Пăлхавçăсен тылĕнчи хумханусем

Йулашки кунсенче Испанири пăлхавçăсен тылĕнче пысăк пăлханусем пулса иртнĕ. Бургосра (Франко генералăн резиденцийĕ) урамра демонстрацисем пулса иртнĕ, демонстрацинче салтаксем те пулнă. Демонстрацире пулнисем: „Тĕп пулччăр йут çĕршывсенчи захватчиксем“ тесе кăшкăрнă.

Испани Мароккинче пăлхавçăсен пĕр çар чаçĕ восстани тунă.

(ТАСС).

Финплана тултарчĕç

ЙĔЛЧĔК. Августăн 31-мĕшĕнче налог агĕнчĕсемпе финанс çекци пуçлăхĕсен Мускавра пулнă канашлăвĕ пĕтĕм финанс работникĕсем патне çыру йанăччĕ, унта çен̆таберĕн 3-мĕшне 3-мĕш квартăл финанс планне 100 процентран кайа мар тултарма чĕнсе çырнăччĕ.

Хăшпĕр агĕнтсем чĕнсе калаçнине пурнăçа кĕртрĕç. 3-мĕш квартăл финанс планне Чăваш Каркалар йалсовечĕ 118,0 процент, Тăрăм—101,7 процент, Хăвăл Çырма йалсовечĕ 101,1 процент тултарчĕç.

Хăвăл Çырма йалсовечĕ нихăçан та квартăлти тата çулталăкри финанс планне вăхăтра тултарса курман. 3-мĕш квартăлта активпа пĕрле ĕçленипе плана тултарчĕç.

Е. Воробйов.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн оргпайне

СЧЕТОВОД-СТАТИСТИК кирлĕ

Ĕçукçи уйăхне 300 тенкĕ.

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ АКАДЕМИ ТЕАТРНЕ

расчотсем тăрăх ĕçлекен

бухгалтĕр, счетовод-кассир, çекретар машинистă

КИРЛĔ

„Сойузутиль“ Чăваш кантурне

йалалăх ĕçлеме

МАШИНИСТКĂ

ТАТА

БУХГАЛТĔР-РЕВИЗОР

кирлĕ

„Союзутиль“ кантурĕнче ыйтса пĕлмеле.

Адрес: ул. Ленина, дом № 3.

Чăваш древпромснабсбыта

йалалăх ĕçлеме

оперативлă пайĕн бухгалтĕрĕ, ваккăн суту-илӳ бухгалтĕрĕ, 2 çын счетовод-картотетчик, счетовод-кассир, каႇкуႇатăр

КИРЛĔ

Ĕçукçине государствă нормировкийĕ тăрăх тӳлеççĕ.

Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: г. Чебоксары ул. Кадыкова, 7. Чувашдревпромснабсбыт.

2—1

„Чăваш Коммунĕ“ [illegible] уйăха 8 р. 84 пус, 3 уйăха 2 р. 22 п., 1 уйăха 74 п. [illegible] Эпир писмене сыхлу тăрăмасам, [illegible] вырăнасçă.

Уполномоченный Чувашглавлита № 510 Гор. Чебоксары, типографи № 1. [illegible] № 711, [illegible]